K

**Книга** имеет:

---

Примечания:

H16

В. ДОЛГОВ
*(ХУТАРСЕМ)*

215/4

# ÇУРХИ КАЛАВСЕМ

*

Цена 2 р.

Чăваш АССР Государство Издательстви
Шупашкар—1943

ПРОВЕРЕНО
2007

# ТУПМАЛЛИ

## I

Тăван çĕршыв (ирхи шухăшсем) . . . . . . . . . 3
Ёмĕт . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 5
Çурхи калавсем . . . . . . . . . . . . . . . . 7
Çĕлен . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 20

## II

Призыв кунĕ . . . . . . . . . . . . . . . . . . 32
"Мĕскĕн" старик . . . . . . . . . . . . . . . . 44
Мирун çилли . . . . . . . . . . . . . . . . . . 49
Йĕрсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 57
Турăсăрсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . 66

8/х 28 : 65-чув.

[redacted]

...ЬКОГО
...АССР

Редактор Ф. Е[redacted] У[redacted]

НТ 140 Заказ № 721, Тираж 3000 экз. Формат бумаги 60×92. Об ем 2,25 печ. л. Подписано к печ. 14/IV—45 г.

Типография № 2 Полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, в г. Алатыре.

Чув.
1-257.

I

# ТАВАН ÇĔРШЫВ

(*Ирхи шухăшсем*)

Человек без родины, что соловей без песни.

(Вырăс халăх сăмахĕ).

... Хĕрелсе, шуралса çутă ир килет-и?

Ял каччисем, хĕрĕсем çĕнĕ юрă юрласа, чечек çырне утаççи, сарă ыраш хушшинче кĕлте çыхаççи, çурласене çĕклесе яла килеççи?..

Тăван çĕршыв, сана аса илетĕп,—сана асра тытатăп!

* * *

... Вăрман урлă каçса, хĕвел çӳле тухать-и?

Вăштăр-вăштăр утă çинче:—Анне, анне!—тесе инке ачи макрать-и, пăть-пăтĕлтĕк путене таçта-таçта юрлать-и, çӳлĕ-çӳлĕ тӳпере тăрри вĕçет-и?

Тăван çĕршыв, сана аса илетĕп,—сана асра тытатăп!

* * *

...Сарă çу пек сар хĕвел хĕртнĕçемĕн хĕртет-и?

Гос. публ. б-ка

Кăнтăр çитнĕ вăхăтра сухаççем суха тăваççи, вĕсен ачи-пăчисем чĕр шыв ăсса пыраççи, çутă пĕве тĕпĕнчен ылттăн-кĕмĕл пулăсем сике-сике пăхаççи?..

Тăван çĕршыв, сана аса илетĕп,—сана асра тытатăп!

* * *

...Каçхи кӳлĕм вăхăчĕ иртсе-иртсе пырать-и?

Тĕттĕм вăрман, сĕм вăрман, нӳрĕ пухать-и, хиртен, уйран, кĕрлесе, кĕтӳ килет-и, çамрăк инке-пике, упăшкине кĕтсе, лаçça яшка çакать-и?

Тăван çĕршыв, сана аса илетĕп,—сана асра тытатăп!

* * *

...Ярăм ярăм пĕлĕт каçа кĕтсе илет-и?..

Пин-пин çăлтăр тӳпере çиçсе-çиçсе тăрать-и, вĕсем патне çур уйăх çĕр-çĕрлеме пырать-и, каччă купăс каласан, хурал йытти вĕрет-и?..

Тăван çĕршыв, сана аса илетĕп,—сана асра тытатăп!

Октябрь, 1942 ç.

## ЁМЁТ

...Чăнкăрах çыранлă пысăк та тарăн шырлан. Чăваш çынни тӳрех хăйĕн çĕршывне аса илет: ун пек çырма-çатрасем, шырлансем Чăваш çĕршывĕнче час-часах тĕлпулаççĕ. Шырланăн тарăн тĕпĕнче шăнкăртатса вăрман шывĕ юхать, В. юхан шывĕ патне çитсе унăн пысăк талккăшĕпе пĕрлешет те çухалса каять.

Йĕри-тавра вĕтĕ вăрман. Çĕмĕрт, çĕмĕрт! Вĕçĕмсĕр çĕмĕрт йывăççи,—турат тулли шурă чечек.

Çакăн чухлĕ çĕмĕрт йывăççи, çĕмĕрт çеçки эпĕ нихăçан та, ниçта та курман. Çĕмĕрт чечекĕн ырă шĕрши пĕтĕм таврана сарăлнă. Вăрман сывлăшĕ шерпет пек: уçă та тутлă.

Çĕмĕрт çеçки куçран каймасть. Чечеке ларнă çĕмĕрт хушшинче тăван юрă хăй-ăссĕнех аса килет.

Çĕмĕрт çеçки çурăлсан та,
Çĕмĕрт çеçки çурăлсан—
Тухас килмест вăрмантан.

Анчах та çак кĕтес тăван юрăран, хам çуралнă çĕршывран питех те катара... Чăн та, инçетре-инçетре Хутар сали—тăван сăпка,

инçетре-инçетре ватă Шупашкар. Çапах та ку кĕтес те пирĕн çĕршывăмăр, чечексем те пирĕн çĕршыври чечексемех, тутлă та паха...

Йĕри-тавра Тăван çĕршыв—Совет Союзĕ.

—Тен, шăпах çакăнта Тăван çĕршывшăн çапăçса вилĕпĕр. Пирĕн масар çак чечек вăрманĕнче пулĕ,—тет юлташ.

—Тăван çĕршывшăн кĕрешĕпĕр, вилес пек çапăçăпăр. Анчах, тусăм, вилмĕпĕр. Тăван çĕршывăн чечекĕсем хушшинче вăтăр çул, хĕрĕх çул пурăнăпăр. Çакăн пек манăн ĕмĕт!—тетĕп те çĕмĕрт чечекне, чи лайăххине, татса юлташăма тыттаратăп.

Июнь уйăхĕн 2-мĕшĕ.
1942 ç.

# ÇУРХИ КАЛАВСЕМ

## 1. АНЧАР

Гитлер пытается согреть злобой сердца немецких солдат: жгите, грабьте, убивайте! Он рассылает свои дивизии, как стрелы, отравленные ядом анчара, в далекие страны.

И. Эренбург.

Çуркунне...

Эпир вăрçакан фронтра каççерен вĕтĕ çумăр çăвать, вăрмансем, ялсем, уйхирсем çине кăвак тĕтре пырса витĕнет, хăш чухне вара ирхине катаран-катаран сарă хĕвел пăхать те юр татах та васкаса ирĕлме тытăнать.

Çак çурхи кунсенче, шурăмпуç килнĕ чухне, сар çу пек сар хĕвел чăмăртанса тухнă вăхăтра,—Волхов вăрманĕсенче, çĕрпӳртре, эпир, анчах ывăнса килнине пăхмасăрах, вырăссен чаплă писателĕсемпе поэчĕсем çинчен сăмах ваклама пуçларăмăр.

—Фашистсем пирĕн ял çине бомбăсем пăрахма тытăнчĕç. Çынсем пӳрт-çуртсенчен тухса блиндажсене кĕрсе пытанчĕç. Манăн килĕм çунать. Эпĕ хамăн япаласенчен нимĕн те илеймерĕм. Пĕтĕмпе те пĕр япала çеç илсе тухрăм...—тет манăн фронтри çывăх юлташăм, политрук Д-н.

—Мĕн?—ыйтрăмăр эпир темиçен.

Политрук, пĕр сăмах шарламасăр, шинельне илчĕ те кĕсйинчен пĕр пĕчĕк кĕнеке туртса кăларчĕ. Сăвă кĕнеки! Пушкин сăввисен кĕнеки вăл!

—Итлĕр!—терĕ те вăл, тӳрех А. С. Пушкинăн „Анчар" ятлă сăввине вулама тытăнчĕ, хуллен-хуллен пуçларĕ те янравлă сассине майĕпен хăпартса пычĕ.

Наркăмăш шывĕ юхтарса ларакан йывăç çинчен çырнă ку сăвăра. Анчар—вăл наркăмăш йывăççи...

„А царь тем ядом напитал
Свои послушливые стрелы,
И с ними гибель разослал
К соседям в дальние пределы",—

вĕçленчĕ поэтăн чаплă сăвви.

...Унччен те пулмарĕ, урса кайнă фашистсем пирĕн еннелле минăсем пăрахма тытăнчĕç, вĕçĕмсĕр те йĕркесĕр пеме пуçларĕç.

—Хирĕç тавăрас вĕсене!—терĕ политрук.

Пирĕн хĕрлĕ воинсем вара, вут пек хĕрсе харсăрланса, фашистсене хирĕç тухрĕç...

Йĕри-тавра вăрçă кĕрлесе тăрать. Шăнкăртатса, шăхăрса çур иртет...

Вулаканăм, ырă юлташăм, эсĕ тахçанах „Анчар" сăвва вуланă пулĕ. Эпĕ те ăна çамрăкрах чухне вуланăччĕ. Халĕ, вăл сăвва тепĕр хут тинкерсе итленĕ хыççăн, манăн пуçăма çĕнĕ шухăшсем пырса кĕчĕç:

—Мĕн пек çав анчар?
—Кам пек çав патша?

## 2. ВĂРМАНТИ ЮРĂ

Что ж, бывает страшновато,
Да врагу в сто раз страшней.
**А. Твардовский.**

Волхов юханшывĕн тăрахĕ. Хĕвел анса ларас вăхăт. Вăрманта çурхи нӳрĕ татах та вăйлăн сисĕнет. Вăхăтран-вăхăта йăваш çил вĕрсе илет.

Хăйсен симĕс тумĕпе мухтанса ларакан чăрăшсемпе хырсем пĕр вырăна хупласах илнĕ. Вĕсем хушшинче питех те хӳтĕ, тӳлек...

Политрукпа старшина çакăнта ĕнтĕ грузовик пырса лартнă. Грузовика çурри таран витсе тăракан чăрăш тураттисем хыçĕнчен тухса, çамрăк артистка, Нина Петрова, эпир юратакан юрра купăс çеммипе юрласа парать.

...И кто его знает,
Чего он моргает. .

Купăс çеммипе çамрăк артисткăн юрри сасси красноармеецсен хăлхисене йăвашшăн пырса кĕрет. Ачашлать, кăмăлĕсене киллентерет. Артисткăн мамăк пек çемçе, юр пек таса, çил пек çăмăл сассине çурхи вăрман та савăнса итлет. Тин çеç çеçкене ларма тытăннă шурă-шурă хурăнсем çамрăк хĕрĕн юррине хуллен-хуллен тайăнса тимлеççĕ. Симĕс чатăрпа витĕнсе ларнă хыр-чăрăшсем, уртăш йывăççисем, пĕтĕм йĕпписене тăратса, пĕлĕтелле пăхса итлеççĕ.

Инçе те мар, уçланкă çуммĕн, ăмăртса, тавлашса, çичçырма юхать, кĕмĕл сасла çич юрă юрласа, пирĕн хитре пикепе ăмăртать.

Анчах çак кĕмĕл сас Нинăн сассине çитеймест, çитеймест вăл Нинăн уçă кăмăлне... Сиччĕ çырма шывĕн сасси кĕмĕл пулсан, çамрăк хĕрĕн сасси ылттăн, çӳçĕсем унăн пурçăн-ука, куçĕсем— кĕмĕшке шăрçа, пичĕ—çырла-панулми...

Эх, хитре-çке, эх, паха-çке унăн юрри!

Çак вăхăтра, атсемĕр, таçта çӳлте, тӳпере, пĕлĕт татăкĕсем хушшинче, „Юнкерс—88" кĕрлерĕ, кĕмсĕртетрĕ, унтан симĕс вăрман çинелле çăхан пек ярăнчĕ...

Пирĕн Нина (кăшт хăрарĕ пулсан та) çухалса каймарĕ, пăртак çеç сассине улăштарчĕ те (ку чухне унăн сасси татах та илемлĕн илтĕнчĕ):

И кто его знает,
Чего он летает,—тесе юрласа ячĕ.

Нинăпа пĕрле çĕр сас юрларĕ, чăрăш вăрманĕ ал çупрĕ, вĕтĕ-вĕтĕ хурăнсем, ăвăссем ташларĕç.

Çар çыннисем çухалса каймарĕç: пĕр самантра, пĕр харăс пăшалсене çĕклерĕç те çăхан çине тĕллерĕç. Вĕçĕмсĕр янрарĕç пăшалсем, такăртаґса юрларĕç пулеметсем.

Вилĕм кайăкĕ пĕлĕтре тайкаланчĕ, сулланчĕ, хура тĕтĕмĕн мăкăрланса, хăрăм пулса, кутăнпусăн çавăрăнайрĕ, унтан чăмайрĕ мур çăви патнелле,—кĕрĕслетрĕ те ваккăн-ваккăн ваклански, çĕр татăк пулса кĕрсе выртайрĕ çăва тĕпне!..

* * *

— „Чего он летает..."—çак юрă халĕ те пирĕн хăлхара, çамрăк пике пирĕн умра.

Эх, хитре мĕн вăрманти юрă! Ни шăпчăк мар, ни чепчем мар пирĕн Нина,—çапах та, çапах та хитре унăн юрри!..

## 3. ШĂПЧĂК САССИ

> Ах, песня, песня, что можешь
> ты сделать с сердцем человека.
>
> Д. Фурманов.

Пĕррехинче, çуркуннехи ăшă касхине, шурăмпуç килнĕ вăхăтра, нимĕçсем, урнă кашкăрсем пек уласа, пирĕн çиннелле вут-хĕм сирпĕтме тытăнчĕç.

Тупă-пăшал сасси пĕр вĕçĕмсĕр кĕрлесе тăрать. Пулеметсем такăртатса пуля тăкаççĕ. Минăсем сĕмсĕррĕн шăхăрса килеççĕ те пирĕн патрах, пирĕн хыçра е умра, ухлатса çурăлаççĕ...

Анчах эпир те хăраса тăмарăмăр: арăслан пек чăрсăрланса, тигр пек хаярланса-хавтăрланса, çапăçма тытăнтăмăр.

Пăшалсем тупăсем, минометсем çĕр чĕтретсе-çĕмĕрсе тăшман çине тимĕр-тăмăр, вут-хурçă тăкаççĕ. Çакна пула вăрман пин урапаллă аслати пек хаяррăн кĕрлесе тăрать, пин-пин саслăн янрать, улать, шав шавлать,—тĕнче кашти хуçăлнă пек туйăнать.

Акă тата пирĕн çĕнĕ тупă пĕрре çеç, пĕр ăстрăм кăна хăйĕн юррине юрласа илчĕ,—кĕл пулса вĕçрĕç фашистсем!..

Çакăн хыççăн пĕр самантлăха пирĕннисем те, тăшмансем те—никам чармасăрах, хăйсем

тĕллĕнех,— шăпланчĕç, тĕнчере никам та çук пек туйăнса кайрĕ...

Эх, атсемĕр, шăпах çак самантра инçе те мар, пирĕн умрах, халĕ çеç вăрçă хаяррăн кĕрленĕ вырăнта, темĕнле майпа тытăнса юлнă пĕр çеçкеллĕ лутра çĕмĕрт çинче шăпчăк сасси, шăпчăк юрри илтĕнсе кайрĕ.

Кĕмĕл саслă, ылттăн саслă шăпчăк, юрла, юрла юрруна, шăрантар!..

Вăрçăра хытнă чун-чĕреллĕ юлташсем лаштах сывларĕç те тем пек тĕлĕнчĕç. Чăтаймарăмăр, эпир те юрă юрласа ятăмăр:

Эх, бей, винтовка,
Метко, ловко,
Беспощадно по врагу!
Я тебе, моя винтовка,
Острой саблей помогу!

## 4. ВИÇĔ ПАТТĂР

Простые люди русские
Стоят у стен седых,
И щели дзотов узкие
Закрыты грудью их.

**Н. Тихонов.**

Вĕçĕ-хĕррисĕр Волхов вăрманĕ. Симĕс-симĕс чăрăшсем айĕнче, унта та кунта, çĕрпӳртсем пытанса ларăççĕ. Вĕсенчен пĕринче Иван Герасименко пурăннă. Красноармеецсем, Герасименко выртса тăнă кĕтесе, унăн вырăнне, çак юлташăн ятне ăшă сăмахпа асăнса, типтерлĕ

пăхса усраççĕ,—ăна, çак вырăна, халлĕхе йышăнмаççĕ.

— Иван вырăнĕ, Иван килмелле... — теççĕ вĕсем.

Ирсерен е каçсерен, проверка вăхăтĕнче, старшина унăн ятне те асăнать.

Стена çинче геройăн портречĕ çакăнса тăрать. Украина сынни, Украина халăхĕн чаплă ывăлĕ,—пит тулли кăмăл, куçĕсем чĕрĕ, инçете-инçете пăхаççĕ...

— Акă вăл, пирĕн ĕмĕр манми тусăмăр, Иван, кунтах вăл,—теççĕ унăн юлташĕсем, паттăрăн сăнĕ сине кăтартса.

...Çак вăрмантах тата тепĕр çĕрпӳрт ларать. Унта Александр Красиловпа Леонтий Черемышев пурăннă. Вĕсем—Иван Герасименко тусĕсем. Кунта та çакăн пек хисеплĕх, чыслăх...

Красиловпа Черемнов — Çĕпĕр сыннисем, пĕр вырăнта ӳснĕ туссем, сунарçăсем. Александрпа Леонтий Хĕрлĕ Çара та пĕрле килнĕ, пĕрле пурăннă, вĕреннĕ, кĕрешнĕ... Колхозра, шахтăра ĕçленĕ, — вĕсем пулнă шахтерсем, çарта—иккĕшĕ те паллă пулеметчик. Кĕрхи йĕпе-сапара, хĕллехи шартлама сивĕре те ĕçленĕ вĕсен пулемечĕ, фашистсене хĕртнĕ, пере-пере антарнă...

— Хăш чухне, савăннипе, юрласа яратчĕç пирĕн туссем, Александрпа Леонтий,—асăнаççĕ икĕ паттăра вĕсен юлташĕсем.

Халĕ ĕнтĕ çак виçĕ тус, виçĕ паттăр çук!

Çав юлташсем, — Герасименко, Красилов,

Черемнов,—тӗлӗнмелле ҫапӑҫса вилнӗ. Вӗсем хӑйсен вилӗмӗпе теприсен вилӗмне ҫӗнтерсе чӗррисен пурнӑҫне ҫӑлса хӑварнӑ,—хисеплер асӑнар ҫак паттӑрсен вилӗмсӗр ячӗсене!

* * *

Каҫхине, вӑрман тӗттӗмленсе ҫитсен, кӗҫӗн лейтенант Поленский чи хӑюллӑ, чи хавтӑр юлташсене чӗнсе илсе разведкан задачи ҫинчен каласа панӑ. Вӗсем ҫеҫ, ҫак юлташсем ҫеҫ, ку чухне ҫак йывӑр задачӑна пурнӑҫлама пултарнине вӑл лайӑх пӗлнӗ.

Тепӗр ҫур сехетрен вара ҫирӗм боец пӗр лапамалла, шур юр ҫийӗн упаленсе вӑрттӑн шуса пынӑ. Пӗлӗтре пин-пин ҫӑлтӑр ҫунса ялкӑшса тӑнӑ. Ура айӗнче ҫемҫе юр йӑлтӑр-йӑлтӑр ҫиҫнӗ.

Инҫе те мар Н. хули—авалхи хула.

Вырӑс ҫӗрӗ, вӑрманӗ, вырӑс хӗлӗ ыталанӑ пирӗн паттӑрсене, хавхалантарнӑ, вӑй панӑ..

Вӗсем хушшинче, паллах, Герасименко, Красилов, Черемнов юлташсем—Ленин-Сталин партийӗн чаплӑ ывӑлӗсем, чи малти вырӑнта пулнӑ. Вӗсем яланхи пекех шиксӗр утнӑ.

— Эсир, юлташсем, малти дозор пулатӑр,— тенӗ вӗсене командир Поленский. Хӑюллӑ дозор вара малалла кайнӑ, утмалла ҫӗрте утнӑ, шумалла ҫӗрте хырӑмпа шунӑ.

Ҫак вӑхӑтра ӗнтӗ умра икӗ мӗлке курӑнса кайнӑ. Иккӗшӗ те ют. Камсем? Паллах, фашистсем. Герасименко гранатине малтанах хатӗр-

лесе пынӑ, халӗ вӑл ӑна пӗр самант хушшинче фашистсем ҫине вӑркӑнтарнӑ,—ыйхӑланӑ, сивӗпе ӗнтӗркенӗ фрицсем ҫӗр татӑк пулса выртнӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн вара нимӗҫсем дзотсенчен вӗҫӗмсӗр пеме тытӑннӑ. Пирӗн разведчиксем те вӗсене хирӗҫ хаяррӑн пеме пуҫланӑ.

Ҫапӑҫу хӗрсех пынӑ. Калама ҫук хаярланнӑ...

Герасименко аманнӑ. Ҫумӑр пек тӑкӑнакан пульӑсем айӗн ун патне санитар Степан Дубина васкаса чупса пынӑ, бинтне туртса кӑларнӑ та Герасименко юлташӑн суранне ҫыхма тытӑннӑ.

— Кирлӗ мар!—тенӗ ҫапӑҫура хӗрсе кайнӑ сержант Герасименко ҫирӗп сасӑпа. Ку чухне вара Дубина хӑйӗн командирне чи малтанхи хут итлемен: унӑн суранне хӑвӑрт ҫыхнӑ та палкаса тухакан ӑшӑ юна юхма чарнӑ.

— Каялла таврӑн!—приказ панӑ взвод командирӗ Поленский. Герасименко хӑйӗн командирӗ хушнине пирвайхи хут итлемен: вӑл малтан мала кайса пынӑ, дзот хыҫҫӑн дзот пӗтерсе, совет воинӗсен ушкӑнне валли ҫул уҫнӑ.

... Шӑпах ҫак вӑхӑтра тӑшманӑн тата виҫӗ дзочӗ ӗҫлеме тытӑннӑ,—ку таранччен вӗсем паллӑ пулман, хӑйсем пуррине систермен. Виҫӗ дзотран пӑр пек ҫӑвакан пульӑсем вӗҫнӗ, вилӗм юррине юрланӑ. Разведчиксем вут ӑшне лекнӗ. Пагтӑрсен пурнӑҫӗ ҫинҫелсе ҫитнӗ. Эх, пурнӑҫ, санран хакли мӗн пур-ши?—пырса кӗнӗ кашнин пуҫне юлашки шухӑш.

— Тӑван ҫӗршывшӑн!—кӑшкӑрса янӑ харсӑр Герасименко.

— Сталиншăн!—тенĕ те пĕтĕм вăйпа чупнă Красиловпа Черемнов.

Акă виçĕ дзот вĕсен умĕнчех, акă пуля... Пульăсем шăхăраççĕ, пин-пин пуля... Анчах та Герасименко, Красилов, Черемнов юлташсем нимĕнрен те хăраман: вĕсем, улăп пек паттăррăн чупса пырса, хăйсен кĕлеткисемпе, çамрăк кăкăрĕсемпе усал вилĕм шăтăкĕсене хупласа ларнă. Виçĕ дзотăн амбразурĕсем тинех ĕнтĕ питĕрĕннĕ: фашистсен пулемечĕсем паттăрсен кăкăрĕсене ала пек шăтарса пĕтернĕ, вĕсен чĕрисем çурăлса кайнă, çапах та тăхлanпа кĕрешнĕ, тăхлан хаклă юнпа çăвăннă. Паттăр кăкăрсем çаплах вилĕм шăтăкĕсене хупласа тăнă...

... Герасименко, Красилов, Черемнов юлташсен хăюлăхне пула пирĕн разведчиксем çитес çĕре çитнĕ, тăвас ĕçе тунă, пĕлес тенине пĕлнĕ, 8 дзот аркатнă, 55 фашистăн пуçне çапса лапчăтна. Çапла вара юмахри пек паттăрсен чаплă вилĕмĕ совет çарĕсен çĕнĕ утăмĕсем валли çул уçнă. Вăл çул такăр мар—тумхахлă, анчах чаплă, хисеплĕ çул. Такăр мар! Такăр мар тăк,—такăрлар!

* * *

... Эй, тăван çыруçăмсем, çĕршыври чаплă юраçăсем! Эсир çак совет çĕршывĕн чаплă ывăлĕсем çинчен, Иван Герасименко, Александр Красилов, Леонтий Черемнов çинчен юрăсем хурăр, хĕвелпе тан тăрса сăрнайсем калăр! Сирĕн чаплă сăввăрсене пĕтĕм халăх вулатăр,

кĕрнеклĕ юррăрсене юрлатăр, тăван çĕршыв савăнса итлетĕр!.. Сирĕн юррăрсен кĕввисем Атăл урлă, тинĕс урлă вĕçчĕр, вĕсене Герасименко, Красилов, Черемнов юлташсем тăван çĕршывăн таса тăпри витĕр илтчĕр!

### 5. КАÇХИ МĔЛКЕ

Çутă каç. Кун пек каçсем çурçĕр тăрăхĕнче; Ленинград çывăхĕнче çеç пулаççĕ. Хĕвел анать. Çаплах çутă. Каç те пулать, те пулмасть,— сисместĕн. Тĕнче çапах та тĕлĕрсе илет, çутă ире кĕтет.

Пĕррехинче, çакăн пек каçхине, пирĕн фронтăн пĕр пĕчĕк участокĕнче тĕлĕнмелле ĕç пулса иртрĕ.

Ку каçхи пек шăплăх нихăçан та пулман, темелле. Пĕрре те фронтри пек мар. Таçта çирĕклĕхре шăпчăк юрлать. Хушăран вăштăрваштăр çил вĕрсе илет. Волхов шывĕ тăрăх вĕтĕ-вĕтĕ хумсем чупса каяççĕ. Пĕчĕкçĕ пулăсем чăмпăлтатса илеççĕ.

Селимгалеев çыран хĕрринче, вĕтлĕхре пытанса ларать. Куç пек тулли шыв çине пăхса тĕлĕнет. Анлă Атăла, хăйĕн тăван ялне—Тутар çĕршывне аса илет. Инçе-инçе вĕсем! Питех те инçе унăн улмуççиллĕ колхозĕ...

—Совет çĕршывĕ сарлака. Тăван çĕршыва тăшмансенчен çăлса хăварас тетĕн, пулсан, эсĕ ăна кунта, фронтра, сыхла, ха[illegible]рубкĕреш!—терĕ пĕррехинче политрук.

Акă Тăван çĕршыв!

28165
Библиотека им. М. Горького ... АССР

Киревсӗр тӑшман, пирӗн ҫӗршыва пайӑн-пайӑн ҫурса тӑкас тесе, унӑн пӗр пайӗ ҫине ирсӗр урине килсе пуснӑ.

Умра юхан шыв. Акӑ темӗскер тӳлек шыва хумхатрӗ. Пулӑ мар,—такам, вӑйлӑрах та вӑйлӑрах ишрӗ. Тӑрсан-тӑрсан, ҫырма хӗрринчи ҫӳҫесене темӗскер хускатрӗ. Инҫе те мар хура мӗлке йӑпшӑнса тухрӗ.

—Тӑр! Кам килет?—кӑшкӑрчӗ постра тӑракан Селимгалеев.

Хура мӗлке, пулӑ пек, ним те шарламасть Хӑй утать те утать.

—Аллусене ҫӗкле!—хаяррӑн кӑшкӑрать каллех часовой.

— Эпӗ... эпӗ...эпӗ Мускав ҫынни. Эпӗ сире, ырӑ тусӑм, тытса чуптӑваттӑм,—ҫепӗҫҫӗн те „кӑмӑллӑн" юптарать каҫхи мӗлке.

„Ырӑ ҫын мар ку,—шухӑшласа илет часовой. Шӑпах ҫак самантра ун патне красноармеец Безбородов чупса ҫитет. Вӗсем „Мускав ҫыннипе" нумаях калаҫса тӑмаҫҫӗ. Вӗсем ӑна тытаҫҫӗ те ӗнсерен пара-пара кирлӗ вырӑна ӑсатаҫҫӗ.

„Кам вӑл? Мӗн шырать? Мӗн кирлӗ ӑна? Мӗншӗн ҫӗр хута шыв урлӑ ишсе каҫать? Ҫитменнине тата тӑшман енчен..."—ыйтать часовой хӑйӗнчен хӑй.

„Анчах пире улталаймӑн!"—тет вӑл ҫав вӑхӑтрах. Ҫапла, ҫапла! Пирӗн красноармеецсене халӗ улталаймӑн: вӗсем хаярланчӗҫ ҫивӗчленчӗҫ!

Такăна-такăна утакан мĕлке курăнми пулчĕ. Ăна ĕнтĕ Безбородов штаба илсе çитерчĕ.

... Тепĕр ик-виçĕ кунран полк комиссарĕ Савинов юлташ полкри красноармеецсене, командирсене тата политработниксене:

—„Мускав çынни“—фашистсем янă шпион. Мускава каймa документсем туса килнĕ,—терĕ.

Çакăн хыççăн Селимгалеева пирĕн пĕтĕм часть пĕлекен пулчĕ. Вăл хăйĕн кашни юлташне тенĕпе пĕрех çав каçхи мĕлке çинчен тепрер хут тĕпĕ-йĕрĕпе каласа пачĕ.

Апрель—май 1942.

## ÇĔЛЕН

### I

...Ухутара çавтери ĕшенсе, ывăнса çӳренĕ хыççăн, пĕр-пĕр уçланкăна тухсан,—сунарçăн чунĕ епле савăнса çемçелсе кайнине ухутара пулман çынсем пĕлмеççĕ те пулĕ. Симĕс çеремпе витĕннĕ çĕр çине çитсе ларсан—ем-ешĕл йывăçсем айĕн, хăрушла çырмасем тăрăх, çатракасем хушшипе утнăран лаштах ывăннă урасем канма тытăнаççĕ. Ларатăн, ларатăн... пĕрре те тăрас килмест. Йĕри-тавра илем. Симĕс ту пек вăрман. Инçе те мар вĕтĕ-вĕтĕ шĕшкĕлĕх. Çаран. Пĕчĕк шыв. Шыв хĕррипе хура хурлăхан. Çырантан çӳлерех, тункатасем хушшинче, шăмат кĕпçи, тĕмĕн-тĕмĕн вĕлтĕрен, шăлан йывăççи, хăмлаçырли аври. Çырлисем пиçсе çитнĕ. Пăнтă-пăнтă мăнтăр...

Эпĕ пĕрре, ухутара çӳренĕ чухне, çакăн пек уçланкăна тухрăм та лутра çăка айĕнче канса ларатăп. Вăрман сывлăшĕ шерпет пек. Сывлама çăмăл та уçă. Каçала сулăннă хĕвел çӳлĕ юмансем хыçнелле пытанасшăн. Ларма çавтери канлĕ. Çывăрма... çывăрма татах та канлĕ пулмалла. Пĕр çывăрса кайсан, сăпкари ача пе-

кех, ӑшӑ та тутлӑ ыйхӑпа ҫывӑрмалла, тӗлӗк те курас ҫук...

—Анчах ҫывӑракан сунарҫӑ—сунарҫӑ-ши вӑл? Ҫук, вӑл—сунарҫӑ мар, йӳҫӗ хупах кӑна. Пуринчен ытла халӗ, чӗрӗ те сывӑ, сисӗмлӗ пулмалла чухне, ун пек сунарҫӑ виҫӗ пуса та тӑмасть. Вӑл пӑшалне те, хӑйӗн пуҫне те ҫухатма пултарать. Ниҫта та, нихӑҫан та пирӗн ҫывӑракан тӑмана пулмалла мар!..

Ҫакӑн пек шухӑшсем мана вӑрман хӳттинче, тӗрлӗ-тӗрлӗ кайӑксен пин-пин сасӑллӑ юррисемпе ачашланса, ҫывӑрма памаҫҫӗ: вӗсем манӑн пуҫа калӑпламаллипех калӑплаҫҫӗ, миме витӗр шӑтарса тухаҫҫӗ.

Ҫак шухӑшсем аттен тахҫанхи калавне аса илтерчӗҫ.

## II

Уҫланкӑ вӗҫӗнче, эпӗ ларнӑ ҫӗртен курӑнман кӗтесре, ӗлӗк Шӑршлӑ Хӗлӗпӗн утар пулнӑ. Ҫав утара пӗр упа вӗреннӗ, каҫсерен тухма пуҫланӑ. Хӑш чухне ик-виҫ вӗлле ҫӗмӗрсе, пылӗсене юхтарса, ӗҫсе кайнӑ. Ҫавӑн ҫинчен манӑн атте те илтнӗ (пӗлессӗр килет пулсан, калам: вӑл—ватӑ сунарҫӑ).

—Айда упана,—тенӗ вӑл хӑйӗн тусне, сунарҫӑ Петӗре.

—Айда!—килӗшнӗ лешӗ.

Вара пӗрре, ҫу вӗҫӗнче, сӗм тӗттӗм каҫ, ҫаксем иккӗн икӗ пӑшалпа упа тытма тухса кайнӑ. Утара ҫитсен, иккӗшӗ те йывӑҫ тӑрне хӑпарса ларнӑ. Кӗтсен-кӗтсен, чӑнах та хайхи

упа вăрмантан хашкаса çитнĕ. Утэр картинчи вĕллесене йăвантара та пуçланă. Пыл хурчĕсем тĕттĕмре сĕрленĕ, нăйкăша-нăйкăша макăрнă.

—Кĕр-р-р-рĕс!—персе янă ватă сунарçă, упа валли юриех тартан тулăх, пўрне вĕçĕ пек тăхлан пульăпа тутă авăрланă пăшалне. Каçхи сас калама çук вăйлă янранă. Çурăлса кайнă пекех туйăннă сĕм вăрман. Çитменнине тата упи урнă пек çухăрса янă: унăн хăрах ури çеç аманнă мĕн.

—Петĕр, эх, мĕскĕн Петĕр! .—тетчĕ яланах ватă сунарçă хăйĕн калавĕпе çак тĕле çитсен. Петĕр упана кĕтсе ларнă çĕртех çывăрса кайнă. Юлташĕ упана персен, çак çамрăк сунарçă, Петĕр, пăшалĕ-мĕнĕпех йывăç çинчен татăлса аннă. Упа умнех тăсăлса ўкнĕ. А эсир ĕнтĕ пĕлмеллех: аманнă упа вăл калама çук усал, тискер. Упа тўрех Петĕр çине сикнĕ, çамрăк „сунарçăн" пуç-купташкине çапса йăлтах аркатса пăрахнă.

Чăнах та, Петĕр тăманаран та тăмана пулнă мĕн, анчах тăманасем каç çывăрмаççĕ. Вĕсем—Петĕрсем мар; кăнтăрла та пытанса çывăраççĕ. Петĕр йышши этемсем вара упа умне тăсăлса ўксен те, йывăр ыйхăран вăранаймаççĕ: вăхăтсăр ыйхă вăл—кахалăн чи тутлă апачĕ!—çакна ĕнтĕ эпир лайăххах пĕлетпĕр.

...Паян эпĕ те нумай шухăшларăм. Шухăшсемпе таçтах çитсе тăтăм.

—Çук, кĕлеткене йывăрлантарса ларас мар! Капла ларсан, çывăрса та кайăп!..—тесе сиксе

тăтăм та малалла утрăм. Унччен те пулмарĕ—эпĕ тайăлса ларнă вырăн урлă, çăка çумĕн, калама çук пысăк хура çĕлен шăхăрса чашкăрса кайрĕ. Çӳç-пуç вирелле тăчĕ.

—У-у-у, хăрушă, тискер чĕрчун, эпĕ çывăрнă пулсан, эсĕ манне кăкăрăма шăтарса, чĕрем витĕрех тухса кайнă пулăттăн,—пырса çапрĕç пуçăма çавтери сулăмлă, çавтери çивĕч шухăшсем.

III

Акă хайхи утар. Халĕ вăл ялти куштан утарĕ мар,—колхоз утарĕ. Пуян утар: виççĕр утмăл вĕлле, чаплă омшанник, культурăллă пӳрт. Йĕри-тавра лутра çăкалăх, пăт-пат хурăн, хĕрлĕ çӳçе... Илемлĕ вĕллесем хушшинче тĕмĕн-тĕмĕн вăрман чечекĕсем темиçе тĕслĕн курăнса лараççĕ. Вĕсен çинче пыл хурчĕсем урлă-пирлĕ вĕçсе çӳреççĕ.

Акă эпĕ утар пӳртне çитсе кĕтĕм.

—Ха-а-а... кĕтмен сунарçă, килех, килех!..—хавасланса йышăнчĕ мана утар хуçи уксах Микулай, мĕн пĕчĕкренпех хурт-хăмăрпа тăрмăшакан хресчен. Халĕ те вăл çак хăйĕн юратнă ĕçне пăрахмасть: колхоза кĕнĕренпех утарта ĕçлет. Тивĕç те!—мĕншĕн тесен вăл унăн чи юратнă ĕçĕ, чи лайăх пĕлекен ĕçĕ: ыйт—вăл сана кашни вĕлле историне каласа парать, ыйт—вăл сана хурт-хăмăр пурнăçĕ çинчен, вĕсен хăйне евĕр йăли çинчен тепĕр профессăртан та кая мар ăнлантарса парать. Унăн чапĕ районĕпех сарăлнă. „Хурт ăсти Николай Петрович

Чамушкин“ тесен, ăна хамăр таврари ялсенче кашнинчех пĕлеççĕ. Николай Петрович хăй вара питех те ăшă кăмăллă, вашават çын,

—Кăçал пыл нумай илетпĕр. Куратăн-и, çăкасем мĕнле чечекленеççĕ?—тет Николай Петрович, утар таврашĕнчи çăкасем çинелле кăтартса.

—Вăйлă çуралнă,—тетĕп эпĕ те.

Калаçнă хушăрах Микулай мучи утар умне тухрĕ те вĕрекен чейник йăтса кĕчĕ. Сĕтел çине чей чашкисем пырса лартрĕ. Тарелкăсем çине çăкăр, пыл хучĕ.

Чейник пăсланса кăна ларать. Çав вăхăтрах:

—Телей, Чамушкин юлташ!—тенĕ сасă илтĕнсе кайрĕ уçăлнă алăк витĕр.

— Телейлĕ, чей тĕлнех пултăн эсĕ, Железнов юлташ,—хушрĕ çак сасса хирĕç Николай Петрович.

„Телейлĕ“ çын вăл—манашкал сунарçă, Тимĕр Кĕркурийĕ, пулчĕ. Вăл нумаях пулмасть Хĕрлĕ Çартан таврăннă çамрăк çын. Çӳреме те вăл çар тумтирĕпех çӳрет-ха. Пăшалĕ унăн калама çук хӳхĕм, хăй вара Ворошиловла стрелок,—пит те маттур перет: кайăк-кăвакалĕсене вĕçсе пынă çĕртех персе ӳкерет, чупса пыракан мулкача персе тивертесси уншăн ним те мар.

— Ну, чей ĕçĕр, килĕр, юлташсем!—чĕнчĕ Николай Петрович. Эпир, вăрман тăрăх çунса çӳренĕскерсем, пăшалсене Микулай мучи пăшалĕ патне çакрăмĕр та, пĕр сăмах чĕнмесĕрех, сĕтел хушшине кĕрсе лартăмăр. (Калама ман-

сах кайнӑ, Чамушкин юлташ ҫав вӑхӑтрах тата сунарҫӑ та).

— Ҫӑка кӑчки чейӗ, пылӗ пӗлтӗрхи пыл, тоже ҫӑканнах, шывӗ, паллах, вӑрман шывӗ, уҫӑ шыв...—хӑналать пире утарҫӑ.—Шӑрӑх чухне чей ӗҫни аван вӑл, атьсемӗр,—тет вӑл стакансем ҫине ҫӑра чей тултарса, — уҫӑлтарсах ярать...

— Да-а-а,—килӗшет Кӗркури, ҫамки ҫинчи тар тумламӗсене сӑмса тутрипе шӑла-шӑла.

— Хуртсем пирӗн мирлӗ пурӑнаҫҫӗ, кунта инҫех мар тата тепӗр утар пур, Саватерсен утарӗ. Ни вӗсен хурчӗсем вӑрра килмеҫҫӗ, ни пирӗн хуртсем вӗсем патне вӑрра каймаҫҫӗ. Вӗсем те ӑстӑнланса ҫитрӗҫ пулмалла...—калама тытӑнчӗ пирӗн хуртӑсти хӑйӗн юратнӑ ӗҫӗ ҫинчен.

— Апат нумай,—хутшӑнчӗ Кӗркури.

— Конешнӑ нумай, но ҫапах та ӗлӗк чухне хуртсен ҫав йӑла пурччӗ.

Чей ӗҫсе ларнӑ ҫӗрте манӑн хӑлхана темӗнле шари-и-и! кӑшкӑрнӑ сасӑ кӗрех кайрӗ.

— Чим-ха, чим! Камсем йӑслаҫҫӗ?—ыйтрӑм эпӗ сасартӑк.

— Виҫ-тӑват ача ҫырлана килнӗччӗ. Ҫавсем пулӗ,—ответлерӗ утарҫӑ эпӗ тӗлӗнсе ыйтнине хирӗҫ. Унччен те пулмарӗ—пӗр арҫын ачапа виҫӗ хӗрача, пурте шкул ҫулӗнчискерсем, чупса та ҫитрӗҫ. Хӑйсем хӑраса ӳкнӗ. Сӑмах та чӗнеймеҫҫӗ.

— Ĕç-лен, ĕç-лен...—сывласа илеймесĕр калать хурлăхан пек хура куçлă хĕрача.

Эпĕ ăнлантăм. Вĕсем çав элĕ курнă çĕленех курнă пулмалла. Хура çĕлен вĕсен çулĕ çине те шуса çитнĕ. Вĕлермелле ăна!

— Ăçта?—ыйтрăмăр эпир виççĕн пĕр харăс.

— Тунката çинче чăшлатса выртать,—терĕç çырла пĕрмисем йăтнă ачасем.

— Айтăр, кайса вĕлерер! — хавхалантарчĕ Железнов юлташ, сĕтел хушшинчен сиксе тăрса.

— Айтăр.

## IV

Ачасенчен пĕри, арçын ачи, Ким ятлăскер, пире çăл патнелле çӳлĕ курăксем хушшипе пыракан сукмакпа илсе кайре. Çăл патĕнчи çĕр кĕпер тĕлне çитсен, шăмат кĕпçинчен тунă шăхличĕпе ăшне еннелле тĕллерĕ те:

— Вон лере, инçе те мар, куратăр-и, хăмлаçырли аврисем хушшинче юман тĕпĕсем, çавăнта пĕр тунката çинче выртать,—терĕ.

— Куратпăр, куратпăр,—ответлерĕ Кĕркури пуриншĕн те. Унтан пирĕн çинелле пăхса:—Ăна эпир тунката çинчен антармастпăр, пурте харăс перетпĕр те çĕлене ала пек тăватпăр, — терĕ тăшмана йĕрленĕ чухнехи пек шăппăн.

Виççĕн виçĕ пăшалпа, кашни пеме хатĕр пулса, хăяхлă та хăмăшлă йĕпе çырма урлă вĕтĕ хупахсемпе витĕнсе ларнă ĕшне еннелле утрăмăр. Инçе те мар, çырма пуçĕнче, хырпа

чăрăш вăрманĕ. Яштака каччă пек чăрăшсемпе лăпсăркка кĕлеткеллĕ хырсем хушшинче шурă араллă кăтра хурăнсем тĕлĕрсе лараççĕ. Ăвăссем те пур. Вĕсен кĕмĕл тенкĕ пек çулçисем хуллен-хуллен алă çупмалла выляççĕ.

Ешнере унта-кунта вăрлăх юмансемпе чăрăшсем таçталла каранса пăхаççĕ. Аялта вĕсен ачисем, вĕтĕ юмансемпе вĕтĕ чăрăшсем, чакăлтилле вылянă пек, карталанса лараççĕ. Йĕритавра вĕсене мухтанмалăх: сарă, шурă, кăвак чечексем, хăмлаçырли аврисем, вĕсем çинче—пиççе çитнĕ пуç пӳрне вĕçĕ пек çырласем. Пĕрерĕн-пĕрерĕн татса хурасчĕ вĕсене хурăн пĕрмене, ах, паха мĕн, ах, хитре мĕн çырлисем... Татасчĕ те çиесчĕ вĕсене!—шухăшлатăн ирĕксĕрех.

Пĕлĕтре шаланкăсем макăрса вĕçеççĕ. Анса ларма хатĕрленекен хĕвел ылттăн урисемпе вăрман хыçне, таçти инçетри çĕршыв çине, ярса пуснă та, куç хĕссе, хăйĕн тулăх çуттине вăрман çинелле сапать, ылттăн вир акать, тейĕн...

Чечексемпе çырласем çинчен куç каймасть,—куççем илем çинчех. Мĕнле хитре кĕтес!..

Анчах... анчах, акă пирĕн урасем айĕнчи хăрăк туратсем шăт-шат! хуçăлчĕç те çатма пек юман тĕпĕ çинче канса выртакан хура çĕлен йăшаланма та пуçларĕ, пуçне çӳлелле çĕклерĕ...

Мĕнле тискер кĕлетке,—сивĕ, сивĕ, ытла та сивĕ чĕрчун, хура юн, ирсĕр çĕлен-калта!

Акă вăл пуçне тата çӳлерех çĕклерĕ, çĕклерĕ те, çăварне карса, наркăмăш тултарнă сăннине кăларчĕ. Пăнтă-пăнтă, пиçсе çитнĕ çырласемпе сап-сарă та кăн-кăвак чечексем хушшипе авкаланса, пуçне çавăркаласа йĕри-тавралла сĕмсĕррĕн пăхать.

Шикленмелле... Çавтери илем çĕрте—çавтери пысăк хăрушлăх: ан ирĕлсе кай, юлташăм, чуна шĕветсе ракан, чĕрене, кăмăла шăратса ыталакан илемпе, ан çывăр,—çывăракан тăманашăн, йывăр шăм-шакшăн, хайхи Петĕр „сунарçа“ пек ыйхă чăптишĕн, пĕр сисĕмсĕр этемшĕн инçе те мар, акă пирĕн умрах—вилĕм!—çитрĕç те çапрĕç пуçа каллех вĕри шухăшсем.

— Хатĕр-и? — пăшалтатрĕ пирĕн хĕрлĕ командир, Железнов юлташ.

— Хатĕр!..

— Пуçĕ çине... Пĕрре, иккĕ, виççĕ...

„Виççĕ“ тесен, виçĕ пăшал сасси, вăрмана хаяррăн кисретсе, таçталлах сарăлса кайрĕ. Кăлтăрмаç пек явăнса выртнă, пуçне çӳлелле çĕклекен çĕлен саланма та ĕлкĕреймерĕ. Тинех пĕтрĕ унăн хашлатса выртасси, — çав кирлĕ ăна, хура çĕлене, çав кирлĕ çĕр çинчи пĕтĕм ирсĕр çĕлен йăха!..

Николай Петрович юман тĕпĕ патне пынăпыман кăшкăрса:

— Ку вара, атьсемĕр, чăн-чăн ăйăр çĕлен! Кун пеккисене ăçта курнă—çавăнтах вĕлерес пулать!—терĕ яланхинчен те çирĕп сасăпа.

... Çакăн пек ăйăр çĕлен пĕррехинче пирĕн

кӳршĕ арăмне, Кулюк инкене, утă çулма кайсан, сисмен çĕртен пырса сăхнăччĕ. Тин çеç çулса пăрахнă утă. Ун çинче Кулюк инке виçĕ уйăхри ачине кăкăр ĕмĕртсе ларнă. Çамрăк çеçке пек ачи, ачашшăн йăпанса, амăшĕн тутлă сĕтне васка-васка ĕмнĕ; амăшĕ, унăн пиçсе çитнĕ çырла пек пичĕ çине пăхса, çывăртăр-ха ку тесе, çурăмĕнчен çемçен-çемçен лăпканă. Сисмен те!—чее те ирсĕр çĕлен, курăксем хушшипе пытанса, йăпшăнса пынă, ача амăшне, ним сăлтавсăрах, кăкăртан сăхма ĕлкĕрнĕ. Ача амăшĕ шыçăнса кайнă, ачи—унăн ăшне пăсăк сĕт лекнĕ пирки варвиттине ернĕ. Сăхнă! — çавăн пек ĕнтĕ çĕленĕн йăли, çавăн пек ĕнтĕ çĕленкалтасен „законĕ"...

— Фашист пек çĕлен! — хыттăнах каларĕ Железнов юлташ.

— Çапла!

— Ахаль мар ĕнтĕ антифашистсем фашиста çĕлен, теççĕ.

— Пĕтермелле ун пеккине!

— Тĕрĕс! Тĕрĕс калатăн, Николай Петрович, ирсĕр çĕлен-калтана пĕтĕрмелле!—терĕмĕр эпир пуртє пĕрле, çак хура асар-писер çĕлене тĕп тунăшăн пĕтĕм чĕререн савăнса.

## V

... Çак ĕç тăвата çул каялла пулса иртрĕ. Унтанпа эпĕ Чамушкин юлташа, хурт ăстине, курманпа пĕрех. Кăçал Германи фашизмĕ пирĕн Тăван çĕршыв çине ултавлăн кĕрсе кайнă кунсенче эпĕ, Çĕмĕрлерен таврăннă чухне, тăван

кĕтесе—хамăр колхоз утарне кĕтĕм. Николай Петрович каллех мана хăналама тытăнчĕ. Пирĕн хушăра сăмах хыççăн сăмах пуçланса кайрĕ. Мĕнле эпир 1937 çулта виççĕн виçĕ пăшалпа ирсĕр çĕлене пуçран персе вĕлерниие аса илтĕмĕр.

— Фашист пек çĕлен...—терĕм эпĕ Тимĕр Кĕркури сăмахĕсене астутарса.

— Чим-ха, эсĕ пĕлетни, Железнов юлташа „Хĕрлĕ Çăлтăр“ орденне панă вĕт?.. Чаплă командир вăл... Железнов ертсе пыракан рота виçĕ кун хушши фашистсен тылĕнче çапăçнă. Фашистсен штабне аркатнă, икĕ взводне пĕтерсе тăкнă... 11 офицере Железнов юлташ хăй персе антарнă. Кашниччех чĕререн тивертнĕ...—калама тытăнчĕ Чамушкин. Унтан вара, пăсланса ларакан чейникрен стакансем çине чей ячĕ те:

— Железнов хамăр колхоза çыру та ячĕ-ха, —тесе мана темĕскерле хаçат тыттарчĕ. Вăл çырăва районри хаçатра пичетлесе кăларнă мĕн.

— Эпĕ,—тесе çырать паттăр командир,— „Хĕрлĕ Çăлтăр“ орденне илме тивĕçлĕ пултăм. Тав тăванăмăрсене, ялйышсене, халăха, тăван çĕршыва, Сталин аттене, — эсир мана пăхса ўстертĕр.

— Тăван çĕршыв, анне, эпир санăн ывăлхĕрўсем, çĕнĕ пурнăç çыннисем, яланах картăрса, пĕр çын пек пулса, сана хўтĕлĕпĕр!

Анне, санăн ывăл-хĕрў патне ирсĕр çĕлен явăнса пырать пулсан, вăл, санăн юратнă ывăлхĕрне сăхас тесе, наркăмăшлă сăннине кăларать

пулсан,—эсĕ çав çĕлен çине пĕтĕм хаярлăхпа тухса, çил пек ыткăнăн!

Анне, сан патна çав сĕлен шуса пырать пулсан, вăл сана сăхасшăн пулсан,—юратнă ывăлусем Юман-паттăр пек, Тимĕр-паттăр пек, Ту-паттăр пек кĕрешĕç, çĕлен пуçне çапса лапчăтĕç, кĕлеткине касса ваклĕç, çунтарĕç те кĕл туса вĕçтерĕç!..

— Тĕп пултăр фашизм—ирсĕр çĕлен-калта!

1937—41.

II

# ПРИЗЫВ КУНĔСЕМ

Мускавран çитрĕ шурă хут,
Ворошилов ал пуснă—
Пире сыхă пулма чĕнеç.
Хĕрлĕ Çара тăма чĕнеç,

(Призывниксен юррисенчен)

I

— Эй, кĕтнĕ кун çитрĕ,—терĕ кăçал Хĕрлĕ Çара каякан Якур, ялсовет председателĕ çар комиссине чĕнекен повестка пырса парсан.

— Хĕпĕртерĕн-и?

— Эй, хĕпĕртемесĕр... Хĕрлĕ Çар—вăл патша çарĕ мар-иç...

— Илмесĕрех ан хĕпĕртесе ўк-ха. Унта каяс текенсем эсĕ çеç мар вĕт.

— Тĕрĕс, анчах мана илмеллех. Эпĕ нимрен те начар мар. Кĕлеткем манăн çирĕп. Сывлăх çителĕклĕ, ман пекки кам пур ялта?.. А чунăм тахçанах Хĕрлĕ Çарта.

— Кая̆ймасан вара?..—сăмахне пĕтермесĕр кулчĕ председатель.

—Ан кул... Мана тăван аннех Хĕрлĕ Çара пиллеçе хăварнă. Мана илмеллех, урăхла пулма та пултараймасть,—татах хавасланчĕ Якур.

— Асатăр... Анчах шел, аннем çук. Елĕк тăшмансен сăмахĕпе хытнă чĕри халĕ çемçелĕччĕ унăн... Савăнĕччĕ вăл эпĕ Хĕрлĕ Çара кайнăшĕн.

Паллах, Якур хăйăн амăшĕ çинчен каланине тӳрех ăнланма çук. Анчах председатель Якурăн шухăшĕ мĕн çинчен пынине ăнланчĕ. Мĕншĕн тесен, Якур халĕ председательте ĕçлекен Кирука хăйĕн амăшĕ ĕлĕк ялти куштансене мĕн тери тарăхни çинчен пĕрре кăна мар каласа панă.

## II

...Якур лайăх астăвать. 1921 çул. Выçлăх. Ниçта пĕр çăвар çăкăр тупса çиме çук. Çитменнине тата яла темле чир çитсе кĕчĕ.Якурсем çемьипех чирлерĕç. Якурăн амăшĕ нимле майпа та сывалаймарĕ. Ыттисем чĕрĕлсен те вăл нумай выртрĕ. Пĕррехинче чирлĕ амăшĕ Якура хăй патне чĕнсе илчĕ те:

— Санăн, ывăлăм, çара каймаллах... Хĕрлĕ салтак пулмаллах санăн, ывăлăм...—терĕ, хытнан, вăйсăр аллисене типшĕм кăкăрĕ çине аранарач çĕклесе хурса.

— Пулăп, аннем. Анчах халĕ эсĕ манпа калаçса хална ан пĕтер-ха,—терĕ саккăра пуснă ывăлĕ, вырăнтан тăрайми чирлĕ амăшне хĕрхенсе.

— Ывăлăм, апла каласа ан хурлантар-ха. Манăн калаçмалăх вăйăм пур... Халĕ, ывăлăм,

хамăр самана... Ленин—ĕçхалăхĕшĕн тăрăшакан-скер... хамăр кĕпĕрнеренех, Чĕмпĕртенех, тет... Пирĕн пеккисен пурнăçне лайăхлатĕ вăл...

— Анне, вăйна ан пĕтерсем...

— Калаçас килет, ывăлăм... Çитĕнсен хĕрлĕ салтак пулăн. Уншăн хĕпĕртетĕп... Ара, Митрахвансем чут çисе яраччĕç вĕт... Ах, эсĕ Хĕрлĕ Çара кайнă чух манăн сывах пуласчĕ, ăсатасчĕ сана.—Йĕрсе ячĕ Якурăн амăшĕ. Якур та, урайĕнче çĕтĕк сăхмансем çинче выртакан амăшĕ умне чĕркуçланса ларнăскер, ĕсĕклесе йĕрсе ячĕ.

Ун чухне пӳртре никам та пулман, нимле сас-чĕв те илтĕнмен,—шăпах пулнă. Таçта, кăмака хыçĕнче, çурăкра, пĕр шăрчăк çеç вăхăтран-вăхăта чĕриклетнĕ. Кил-йышĕн ытти çынĕсем чиртен чĕрĕлкеленĕ те уя пур-çук тыррине пуçтарма тухса кайнă. Пӳртре Якурпа амăшĕ ыталанса йĕнĕ.

— Эпĕ, ывăлăм, эсĕ Хĕрлĕ Çара кайнине кураяс çук, чĕреме çемçетеес çук...—тенĕ те амăшĕ шăпланса выртнă. Çамрăк Якур ним пĕлмесĕр ларнă. Выртсан-выртсан, амăшĕ выçăпа, чирпе путса ларнă куçĕсене хуллен уçнă та ывăлне тепĕр хут хăй патнерех чĕнсе илнĕ. Вара вĕри сасăпа вăраххăн:

— Ывăлăм...—тенĕ.

— Мĕн?—чĕннĕ те Якур тата та хытăрах йĕрсе янă.

— Чӳречене чашăкпа...

— Мĕн?..

— Тӑрӑ шыв ларт...

— Ма?..

— Чунӑм... ҫӑвӑнса кайтӑр... Тата пуҫ айӗнчен ҫытара ил. Вӑл тӗк ҫытар...—тенӗ вӑйсӑрланса ҫитнӗ амӑшӗ.

Якур аса илнӗ: чун, этем вилнӗ чухне, ҫӑвӑнса тухса кайсан, ҫылӑх пӗтет... Тӗкрен тунӑ ҫитар ҫинче вилсен—ҫылӑх нумайланать, тетчӗҫ стариксемпе карчӑксем. Унӑн амӑшӗ те ҫавнах каланӑ. Ҫак сӑмахсем тӗрӗс-и, тӗрӗс мар-и? — паллах, Якур пӗлмен, унӑн шутласа тӑма вӑхӑчӗ те пулман. Ҫитменнине тата ҫамрӑк ача пӗлме те пултарайман. Вӑл амӑшӗ мӗн-мӗн каланине тунӑ.

Якур, пӳрт тӑрӑх чылай чупкаласа ҫӳресен, амӑшӗ патне пынӑ та, пӗчӗк аллисемпе амӑшӗ пуҫӗ айӗнчен тӗк ҫытара туртса кӑларнӑ.

— Кӑлартӑн-и?..

— Кӑлартӑм...

— Шыв лартрӑн-и?

— Лартрӑм...

— Ну, ывӑлӑм... Митрахвансене махха ан пар...

— Вӑйна ан пӗтер-ха, анне...

— Ленин... хамӑр ҫынах, тет... Ывӑлӑм, Хӗрлӗ Ҫара каях...—тенӗ вӑхӑтра Якур амӑшӗ, ҫӑварне, вӗҫеймен ҫерҫи чӗппи пек кап-кап! карнӑ та, вилсе те кайнӑ.

...Ҫамрӑк ача, тӑлӑх Якур, нумайччен йӗнӗ. Ҫитӗнерехпе амӑшӗн сӑн-сӑпатне те мана пуҫланӑ, анчах амӑшӗ Хӗрлӗ Ҫара каях тенине

вӑл манман. Çамрӑк чӗре амӑшӗн юлашки сӑмахӗсене кӑçалччен усранӑ.

III

Якур ашшӗ, йывӑр ӗçпе тертленсе пурӑннӑскер,—Хрисан, чирлӗ çын пулнӑ. Çавӑнпа та, патша вӑхӑтӗнче вӑл шурӑ билетпа салтакран юлнӑ. Тӗнче вӑрçи пуçлансан, пӗр çултанах çурçансӑр пулса ларнӑ вӑл. Çав май вара Якур ашшӗ салтак службинчен пачах юлнӑ.

Ялти куштансем, кулаксем „шурӑ билета" кун кӑтартман. Килне пырсах мӑшкӑланӑ, кулнӑ, хӗненӗ.

— Хрисан табак шывӗ ӗçсе службӑран юлчӗ,—тесе ят сарнӑ ун çинчен.

— Салтак арӑмӗсемшӗн юлать,—тесе çӳренӗ хуттӑр хуçи, ял пуянӗ Митрахван.

— Шурӑ билет чӗппи...—тесе чӗннӗ ялти „ыр çын" ывӑлӗсем Хрисан ачисене.

...Пӗрре, хӗвел аннӑ вӑхӑтра, Хрисанӑн аслӑ ывӑлӗ, Хветӗр, кӗтӗве хирӗç кайнӑ. Икӗ сурӑхне тупнӑ та, килелле хӑваласа килнӗ. Лупашкари[1] куштан, кӑрмасунла Давид („Патша" тесе чӗннӗ ӑна ялта) Тӗпсӗр кӳлӗрен пулӑ тытса таврӑннӑ. Давид „патша" Хветӗре курсан, урампа чип-чипер утса пыракан ачана йӗпе сӗрекепе шаплаттарса çапма тытӑннӑ. Пӗрмай урасенчен çапнӑ. Ултӑ çулхи Хветӗр кашни çапмассерен çӗре пере-пере аннӑ. Вӑйран кайнӑ ача. Юлаш-

[1] Ялӑн пӗр пайне Лупашка тенӗ.

кинчен темле шалча çине çитсе тăрăннă та хăрах куçне шăтарнă.

Кун хыççăн Митрахван ывăлĕсем, салтакран пĕри кача пӳрнине, тепри вăта пӳрнине татса килнĕскерсем, Хрисан çемьине хĕсĕрлеме татах та тепĕр сăлтав тупнă.

— Ывăлинне хăех тĕртсе шăтарчĕ... Çитĕнсен салтакран юлтăр тесе шăтарчĕ...—ахăрнă Митрахванăн пĕрер пӳрнесĕр ывăлĕсем.

Чухăн Хрисан, ним тăвайман пирки, староста патне кайса пăхнă.

— Вĕсем—салтакра пулнă çынсем, вĕсен права пысăк. Эсĕ мĕн? Шурă билет кăна. Санне пыршуна та кумма пултараççĕ Митрахван Иванч ывăлĕсем,—тенĕ мăн сухаллă староста ахăрса-кулса.

Якурпа Хветĕр ашшĕ-амăшĕн пĕтĕм ăшчикĕ тулса, кӳренсе çитнĕ. Çемçе чĕреллĕ амăшĕ кунĕн-çĕрĕн йĕнĕ. Ним тума та май çукран турра кĕлтума тытăннă.

...Фронтра унта та кунта тупă йĕтрисем ахлатса çурăлнă. Ĕçхалăх юнĕ çырма пулса юхнă. Çынсем çĕршерĕн, пиншерĕн кăткăсем пек тăкăнса вилнĕ. Салтак шинелне тăхăннăскерсем, хăшĕ аллине, хăшĕ урине таçти ют хирте çухатса хăварнă.

Хветĕрпе Якур, вĕсен ашшĕпе амăшĕ фронтри çав тери хăрушă ĕçсене курнипе мар, унăн йывăрлăхĕ таçтан-катаран пырса тивнипе кӳреннĕ, вĕсене тата ялти ĕçсемех, ялти вăрçах, кӳрентерсе çитернĕ. Вĕсем фронтри ĕçсене

тавçăрса илеймен, тарăхнипе—ывăлне, вăл çитĕнсенех, салтака парасси çинчен калаçнă.

— Эпир телейсĕр, телейсĕрĕн кун çук...— тенĕ вĕсем. Телей турăран ыйтнă. Турă çине шаннă.—Турă çиленнĕ пулсан, кĕлтусан—сырлахĕ, турă—вăл Митрахван мар, староста мар,— тенĕ вĕсем.

Пĕрре, Хрисан вăрмана кайсан, Якур амăшĕ сĕтел çине пăтă пĕçерсе лартсах турăран çылăхсене каçарма ыйтнă.

— Каçарсам, атте турă, турă амăшĕ, атте турă ывăлĕ... Ывăлăма салтака юрăхлă тусам...— тархаслана Хрисан арăмĕ.

— Салтака илтер мана, турă мучи...—ыйтнă турăран пĕчĕк Якур та.

Нумайччен кĕлтусан, амăшĕпе ывăлĕ сĕтел хушшине кĕрсе ларнă. Сĕтел çинче пĕр пуçламан çăкăр тата пăсланса ларакан пăтă пулнă. Пăтти çинче çерçи пуçĕ пек сар çу катăкĕ ирĕлсе тăнă.

Якур амăшĕ çăкăр пуçлана та, çăкăр çăмси çине малтанхи кашăк пăтта хурса, ывăлне панă.

— Вăйлă пул,—тенĕ амăшĕ.

—Митрахвансене пĕтерме-и?...—ыйтнă Якур.

## IV

Якур кунĕн-çĕрĕн кĕтнĕ вăхăт, комиссине каймалли кун, çитрĕ-çитрех. Кунĕ пулчĕ кĕрхи çанталăка кура мар: илемлĕ те ăшă кун пулчĕ. Хĕвел ирех савăнса, темле сар кайăк пек сар-

каланса тухрĕ. Кĕрхи янкăр таса сывлăш пĕтĕмпех ăшăнса кайрĕ.

Комиссине каймалли яшăсем ирех тăчĕç, ирех тăчĕç те ялсовет канцелярийĕ умне пухăнчĕç.

— Юлташсем, пурте пĕрле каятпăр,—илтĕнчĕ Якурăн сасси, яшăсем пухăнса çитсен.

— Пĕрле, пĕрле...—хавасланчĕç çамрăксем урамра.

— Тăвата лавпа каятпăр... А эсĕ, Тиçук, купăсна илме ан ман...

— Юрать,—ответлерĕ купăсçă, кăçал çара каймалли Тимофей Петров.

— Ак тата мĕн, юлташсем, халĕ килсене кайса лайăхрах апатланăр, пит-куçăрсене çăвăр, лайăхрах тумланăр. Комисси умне кетмертерех тăрăр.

— Ясна! Хамăр ял ятне çухатас çук,—хавасланчĕ купăсçă.

— Пирĕн çинчен сар хĕрсем куçĕсене ан илччĕр,—хутшăнчĕ Мĕтри.

— Паллах,—терĕ те пĕчĕк Куçма юрласа ячĕ.

Ĕлĕк яла култарманне
Халь тин яла култарас çук...

Куçмана яланхи пекех Мĕтри хăйĕн мăн сассипе пулăшрĕ. Павăл шăхăрса юрларĕ.

Ирхи сасăсем таçталлах карĕç, таçталлах кайса кĕр сăнĕ çапнă вăрман хĕрринче çухалчĕç.

Аслати авăтать, çиçĕм çиçет.
Тупă сасси таçта илтĕнет.
Границăра хура пĕлĕтсем—
Сыхă тăрăр, паттăр йĕкĕтсем.

. . . . . . . . . . . . . . .

V

...Призыв пункчĕ. Тап-таса пӳлĕмсене праçникри пек илемлетнĕ. Стенасем çинче йĕритавра –картинсем, портретсем, картăсем. Симĕс пустав витнĕ сĕтелсем çинче—хаçат-журналсем, вырăсла, чăвашла кĕнекесем. Кунта кĕтсе, анасласа лармалла мар,—вула, вĕрен. Ыйтса пĕлес килет пулсан,—ыйт, пĕл. Выляс килет пулсан,—юнашар пӳлĕме кăна кĕр. Унта тата мĕн-мĕн çук-ши? Биллиард, шахмăтсем, шашкăсем, домино,—выля, савăнăçлă кан. Пăхатăн та тĕлĕнетĕн: мĕнле патшалăхра, хăш саманара салтак ачисене çавăн пек кĕтсе илнĕ-ши? Çук, ниçта та кĕтсе илмен, ниçта та ун пекки пулман. Çавăнпа та пирĕн хальхи çамрăксем Хĕрлĕ Çара савăнсах, хĕпĕртесе каяççĕ.

Призывниксем выляççĕ, кулаççĕ.

— Мат!—тет Мĕтри.

— Ак сана мат!—пырса лартать Павăл туппа.

— Мимо!—илтĕнет тата теприн сасси.

— А эпир çапла,—хупса хурать Куçма доминон вуниккĕпе витĕннĕ вĕçне.

— Вăт çакăн пек выляççĕ,—тесе кустарса кĕртет Якур тӳп-тӳрĕ те яка кийпа икĕ чăмăра харăс сетка çине.

— Куратăр-и, саккăр вĕт...

— Саккăр-тăк, çĕнĕрен вылятпăр — каллех выляма ыйтать Якура хирĕç вылякан çамрăк, Тукас ачи Арасланов...

... Тепĕр пӳлĕмĕнче явка сĕтелĕ. Призывниксем повесткăсене, кирлĕ документсене кăтартаççĕ те, малти пӳлĕме кĕрсе каяççĕ.

Кунта врачсем.

Куç тухтăрĕ призывниксене пуринчен нумай тытать.

— Çук манăн трахом!

—Çуккине хамах куратăп.—Çаплах тĕплĕн пăхать, тĕплĕн тĕпчет „глазник", мĕншĕн тесен, куççăр çын ăçтан-ха пирĕн çара юрăхлă пултăр?

Призывниксем, куçĕсене пăхтарнă хыççăн, невропатолог, хирург патне пыраççĕ. Кашни сывлăхне „ывăç тупанĕ çине хурса пăхнă пек" пăхсан çеç, призывниксем военком патне пыраççĕ. Вара ăшă та кăмăллă калаçу пуçланать.

— Петров юлташ, пытармасăр кала-ха: санăн çав майри çĕвĕк кăшт та пулин кансĕрлети?—ыйтать военком.

— Командир юлташ, пĕрре те суймастăп: манăн ним те ыратмасть. Çĕвĕк çинчен эпĕ тахçанах ĕнтĕ манса кайнă,—ответлет илмесрен хăраса ӳкнĕ Тиçук.

— Тĕрĕс калать Петров юлташ,—илтĕнет хирург сасси.

— Ан хуйхăр, эсĕ—паянтан красноармеец, —савăнтарать военком.

Петров хыççăн пĕчĕк Куçма кĕрет.

— Пур енчен те юрăхлă, анчах çӳллĕшĕ çитмест, 151 сантиметр кăна...—калать тухтăр.

— Мана çар служби хăратмасть, командир юлташ. Ан хăварăр, илĕр мана. Эпĕ допризывниксене вĕрентнĕ чухне вĕренӳ ударникĕ, Ворошилов пек перекен пултăм... Ытах, çитĕнсе çитеймен пулсан, çарта çитĕнĕп...—тархаслать Куçма.

Комисси членĕсем калаçса илеççĕ. Паллах, Малов Куçма пĕчĕкрех, виçе çитмест, икĕ сантиметр лутра. Çапах та ăна çара илеççĕ.

Якура юлашкинчен çеç чĕнчĕç.

— О, Егор Белобилетов,—сиксе тĕчĕ военком, хĕлле допризывниксене çар ĕçне вĕрентнĕ чух отличник пулнă Белобилетов юлташа курсан.

— Эпĕ, командир юлташ!

— Мĕнле унăн сывлăхĕ?—ыйтрĕ военком тухтăртан.

— Чĕри мотор пек, ӳпкисем вĕркĕч пек... Пурте çителĕклĕ,—пулчĕ ответ.

— Апла тăк, юрăхлă,—пăчăртарĕ военком Якурăн, темиçе çул Хĕрлĕ Çаршăн çуннă хастар çамрăкăн, аллине.

— Кĕтнĕ кун тинех çитрĕ!—Тем пек хĕпĕртерĕ, тем пек савăнчĕ Якур, çăлтăр пек йăлкăшса çунса, çиççе,

— Ак хайхи, анну калана пекех пулса тăчĕ,—терĕ военком, Якур кăçал хĕлле каласа панине астуса илсе. Военком çавăн чух унăн калавне пĕр сăмах сиктермесĕр итлерĕ, тĕлĕ-

не-тĕлĕне ыйтусем пачĕ. Юлашкинчен вара ҫак примера допризывниксен пуххинче тунӑ докладра илсе кӑтартрĕ. Ҫак примерӑн класлӑ пĕлтерĕшĕ калама ҫук пысӑк, терĕ вӑл. Якур амӑшĕ тĕттĕм ҫын пулнӑ, турра ĕнненнĕ, анчах класс сисĕмне тем хулӑмĕш тĕттĕм те, тĕн, турӑ ячĕ те хуплайман. Вӑл ҫĕнĕ саманан пĕтĕм тĕнчене, пĕтĕм пусмӑрти халӑхсене ҫул тупма ҫутӑ паракан Хĕвелне курнӑ; вӑл, ĕлĕк ҫӑкӑрсӑр, тĕттĕмре ларнӑскер, халĕ ӑна курнӑ. Ҫавӑнпа та, вӑл вилнĕ чух та Ленин тесе вилнĕ, ҫакӑ унӑн юлашки сӑмахĕ пулнӑ.

... Урамра, призыв пункчĕ умĕнче—ҫамрӑксен сасси. Паян Хĕрлĕ Ҫар ретне тӑнӑ яшсем, маттур йĕкĕтсем, кĕр тумĕпе тумланнӑ кӑтра хурӑнсем айне пухӑннӑ. Вĕсем патне сарӑ хĕрсем пынӑ. Купӑс ҫемми ирĕлет кӑна. Каччӑсемпе хĕрсем купӑс кĕввипе савӑнса юрлаҫҫĕ ҫамрӑк кĕрешӳҫĕсен ҫĕнĕ юррисене.

Янравлӑ сасӑсем, вĕҫе вĕҫе, каяҫҫĕ таҫтах: илтĕнеҫҫĕ ял-ял урлӑ, уй-уй урлӑ...

Ҫут кӳлĕри тӑр шыва
Ирхи сывлӑм ҫитес ҫук.
Пирĕн аслӑ ҫĕршыва
Нимле тӑшман ҫĕнес ҫук.

Йĕплĕ-йĕплĕ пиҫене
Татса тӑкӑр тĕппипех!
Асар-писер тӑшмана
Пĕтерĕпĕр пуҫепех!

1936.

## „МĔСКĔН“ СТАРИК

Микулай пиччепе Савин юлташ сад пахчинче тĕл пулчĕç те хăйăр сапса якатнă сукмак тăрăх, шап-шурă çурăлнă улмуççисем хушшипе, тĕрлĕ-тĕрлĕ чечексемпе витĕннĕ çерем патнелле утса кайрĕç; вĕсем, тем çинчен питех те тимлĕн калаçса, симĕс тĕм умне, канса ларма тунă тенкел çине пырса ларчĕç.

—Эпĕ сан патна, Николай Петрович, лешин çинчен, ирхи кайăк çинчен калама килтĕм. Ну вăт, ыйтса тĕпченĕ хыççăн акă мĕн курăнчĕ: эсĕ шăпах çав эпир шыранă кайăка çаклатнă.

—Вăт пулать-çке этем тени, пăхма хăй—хĕтĕ-хĕтĕ старик кăна ĕнтĕ, сухал ăшне путнă хăрăк этем,—терĕ тĕлĕнсе Микулай пичче.

—Сухал ăшне путнă, тетĕн? Анчах унăн нимĕнле сухал та çук вĕт, пăхма çеç мăн сухаллă старик, чăннипе илсен, вăл пĕтĕмпе те вăтăр çулта çеç.

Çак сăмахсене илтсен, Микулай пичче, çиллине шăнарайманнипе, пĕрре шуралса кайрĕ, тепре хĕрелсе кайрĕ те:

—Ăна, шуйттан кĕвентине, ма тытса ĕнселемерĕм пĕрре,—тесе сурчĕ.

Микулай пичче паян, ир ҫинче, мӗн пулнисене тепӗр хут аса илчӗ.

Николай Петрович, колхоз садӗнче ӗҫлекен мичуринец, ҫак иртнӗ каҫхине те сад пахчинчех ҫӗр каҫнӑ. Вал хӑйӗн юлташӗсемпе перле каҫпала, тӑм ӳкессине пӗлсе, улмуҫҫи чечекӗсене тӗтӗрнӗ, ҫӗрӗпех ӗҫленӗ.

Микулай пичче хуралҫӑсен ҫуртӗнче пӗр-ик сехет тӗлӗрсе илнӗ хыҫҫӑн хӗвелтухӑҫӗ хӗрелме те тытӑннӑ. Инҫетри вӑрман хыҫӗнчен хӗвел саркаланса тухнӑ. Ҫак вӑхӑтра Микулай пичче сад айккине хӑйӗн ирхи ӗҫӗпе кайнӑ та тӗлӗнмелле япала курнӑ.

Шырлан тӑрӑх пӗр кӗлетке йӑраланса пырать. Пӗрре ҫын пекех туйӑнать, тепре кантӑр ҫинчи мӗлке пек те туйӑнса каять.

—Мӗн пултӑр ара ку?—тӗлӗннӗ Микулай пичче. Пӑхсан-пӑхсан, вӑл тавҫӑрса илнӗ: ҫак мӗлке вӑл—калама ҫук ватӑ старик; хӑй аран-аран уткалать, хушӑран ӳсӗрет. Унӑн аллинче хӑрӑк патак. Ҫийӗ-пуҫӗ вара лӑстӑр-лӑстӑр ҫӗтӗк. Шурӑ сухалӗ кӑвапа таран (ун пек сухаллӑ ҫынсене пирӗн таврара „кӗреҫе сухал“ теҫҫӗ).

--Мӗнле старик ҫак вӑхӑтра ҫӳретӗр?—шутланӑ Микулай пичче.

Ватӑ старик, пӗшкӗнкелесе, хуллен-хуллен утса пынӑ. Николай Петровича вӑл курмӑш пулнӑ, ҫитменнине тата, ун пек ҫынна курасси ҫинчен шухӑшламан та... „Кунта вӗт хресченсем пурӑнаҫҫӗ, вӗсем хушшинчен тухасси вӑл—

сурăх кĕтĕвĕ витĕр тухнипе пĕрех...“ тенĕ вăл хăйне хăй.

—Эсир ăçта каятăр?.. Ăçтисем?—тӳрех хыттăн кăшкăрса ыйтнă пахчаçă старикрен.

—Çавăнталла... Застава патне ĕçпе каймалла... Унта манăн ывăл пурăнать,—тенĕ ют çын.

—Ывăлу тетĕн?—ыйтнă Микулай пичче.

—Ывăлăм çав, ывăлăм...

—Айтăр, илсе каям ывăлăр патне, эпĕ ăна пĕлетĕп, тӳрĕ çулпа кайăпăр...

—Каяр-ха эппин, каяр-ха,—эхлетсе пынă вата старик.

,,Савин юлташăн ашшĕ ăçтан çавăн пек пултăр? Мĕншĕн вăл пĕччен çĕтсе çӳретĕр?“ пырса кĕнĕ Микулай пиччен пуçне хăюллă та çивĕч шухăш. Мăн сухаллă старике вăл хуралçăсен çурчĕ патне илсе çитернĕ. Хурал çурчĕн алăкĕ умĕнче: ,,Эсĕ кунта кăштах ларса кан-ха. Эпĕ ăшăрах тумтир тăхăнса тухам“, тенĕ Микулай пичче. Старик килĕшнĕ. Сад хуçи, пӳрте кĕрсенех, хуралçăсене вăратнă.

—Ют çын... Заставăна каясшăн...—шăппăн каланă вăл канакан икĕ хуралçăна хăлхаран. Вăрт-варт сиксе тăнă вĕсем, часах хăйсен пăшалĕсене ярса илнĕ. Тухнă тухманах, хайхи янаваррăн пăхса ларакан старике хупăрласа илнĕ. Вĕсемпе пĕрле Микулай пичче те хăйĕн пĕчĕк пăшалне илсе тухнă. Виççĕмĕш хуралçă та çывхарса çитнĕ.

—Çĕкле аллуна,—тенĕ Николай Петрович, халтăркка старик çине пăшалĕпе тĕллесе.

—Эх, ырӑ ҫыннӑмсем, эсир мана ватӑ пулин те, такам вырӑнне хуратӑр пулмалла,—тенӗ лешӗ ҫемҫе те йӑпӑлкка чӗлхепе,—хӑвӑрах ӗнтӗ куратӑр, эпӗ питех те мӗскӗн ҫын. Турӑ ҫырлахтӑр ун пек хӑтланма...—эхлете-эхлете сӑхсӑхнӑ „мӗскӗн" старик. Пӑхма хӑй ҫавтери йӑвашшӑн курӑннӑ, айванлансах кайнӑ. Ҫӑмӑр айне пулнӑ кӑркка пек тайкаланнӑ, нӑйкӑшнӑ.

Хуралҫӑсем старике ухтарнӑ, анчах нимӗн те тупайман: унӑн ни пӑшал таврӑшӗ, ни документсем, ни укҫа-тенкӗ пулман,—пӗр сӑмахпа каласан, хӑрӑк патаксӑр пуҫне унӑн нимӗн те пулман.

—Вӑт,—тенӗ вӑл каллех эхлетсе,—нимӗн те ҫук вӗт. Ара ман пек чухӑн ҫынӑн мӗн пултӑр? Чӑн та, эпӗ хамӑн ывӑлӑма тахҫантанпах курман, вӑл ҫитӗнсе ар пулнӑ ӗнтӗ. Тен, мана паллаймӗ те. Пысӑк выранта ӗҫлет. Ун патне пырсан, хӑвӑр темӗн аташнине эсир уҫҫӑнах курӑр. Эй, атте турӑ, ӳкӗте кӗртсем ҫакӑн пек йӑнӑш тӑвакан ҫынсене...

Ҫапла тӗркӗшсе тӑнӑ вӑхӑтра хуралҫӑсенчен пӗри лаша кӳлсе килме те ӗлкӗрнӗ.

—Ларӑр, сирӗн утма вӑй ҫук пулӗ, ватӑ ҫынна шеллес пулать.

Сӑхсӑхса таракан старике ирӗксӗрех урапа ҫине лартнӑ та застава начальникӗ патне вӗҫтерсе кайнӑ.

Акӑ мӗнле пулса иртнӗ ӗҫ. Ун ҫинчен Микулай пичче Савин юлташа ирех каласа пачӗ. Унтанпа нумай вӑхӑт иртнӗ. Савин юлташ ҫак

ĕç мĕнпе пĕтни çинчен каласа пама Николай Петрович патне ятарласах килчĕ. Акă вĕсем ешĕл çеçкеллĕ тĕм патĕнче ашшĕпе ывăлĕ пек калаçса ларaççĕ.

Хĕвел кăнтăрларан иртсе каçалла сулăнсан тин, вĕсен сăмахĕ вĕçленсе çитрĕ.

—Пирĕн колхозниксем,—терĕ юлашкинчен Савин юлташ,—çав „старик" пек начар тумланмаççĕ. Чăнах та, çак „мĕскĕн сынна", вăл граница урлă каçас умĕн, хуçисем вĕрентнĕ. „Совет Союзĕнче пурте çĕтĕк-çатăк тумтирсем тăхăнса çӳреççĕ, лайăх тумтир тăхăнса кайсан, сана тӳрех палласа тытма пултараççĕ, тепĕр енчен тата, унти хресченсемпе рабочисем мăн сухаллă, унта авалхи йăлапа пурăнаççĕ: мунча кĕмеççĕ, сухалсене хырмаççĕ..." тенĕ çав сынна пуян хуçисем. Анчах çав государствăн разведки йăнăшнă, эсир çав шпиона часах палласа илтĕр...

1939.

## МИРУН ÇИЛЛИ

...Мирун сасартăк, арăслан пек хаяррăн, ура çине сиксе тăчĕ те пĕр типшĕм, вĕшле евĕрлĕ хура çынна сулахай аллипе çĕтĕк пальто çухавинчен çавăрса тытрĕ,—унччен те пулмарĕ, Мирунăн хаяр сасси чĕлĕм тĕтĕмĕпе тулнă пӳлĕмри сывлăша чĕтретсе ячĕ.

—Пĕрре çапса вĕлерĕп... Ух, эсĕ, ирсĕр этем!—Вутăн та кăварăн вĕçрĕç Мирун çăварĕнчен сăмахсем. Пичĕ-куçĕсем унăн йăлтах хĕрелсе кайрĕç, тем пек вĕриленчĕç—пăхсан хĕлхем тăкăнать, тейĕн. Сарлака çамки çине пăтăр-пăтăр тар пĕрчисем шăрçаланса тухрĕç.

—У-у-у!.. Эсĕ çавăн пек калатăн-и? Йытă кĕлетки, ăçтан кунта сĕтĕрĕнсе килтĕн? Пăхсах паллă, эсĕ—пирĕн тăшман...—терĕ те Мирун сылтăм аллине чăмăргаса мĕн вăй çитнĕ таран сĕтел çине кĕрĕслеттерсе çапрĕ. Сĕтел силленсе, тайкаланса илчĕ.

Çынсем Мирун патне иккĕн-виççĕн чупса пычĕç те:

—Эсĕ, Мирун, ача-и? Мĕн хăтланатăн?—тесе аллисенчен çирĕппĕн çавăрса тытрĕç.

—Вĕлерет вĕт çынна!—сăмах хушрĕ тата пĕр темле çын, кĕтесре сăра стаканĕ çине ыйхăпа аптăранă куçĕсемпе, кăнтăрлахи тăмана пек, сĕмленсе пăхса лараканскер.

—Тăванкасси пупне мар-и вăл лектерчĕ?—ыйтрĕ унпа юнашар лараканни. Анчах вĕсен сăмахĕсем икĕ тутаран тухса сĕтел çине кăна анчĕç, тăрмашакан çынсем патне çитеймерĕç. Вут пек вĕриленсе кайнă Мирун вĕсене пачах та илтеймерĕ.

—Прохвост!—терĕ те лăплана пуçланă Мирун çĕтĕк пальтон татăлса кайнă çухавине вĕшле çын çинелле ывăтса ячĕ.

* * *

Хаяр сивĕ çил пек пулчĕ. Хăш чухне çавăн пек çил кутсăр-пуççăр çаврăнса килет те пĕтĕм çӳп-çапа çӳлелле çĕклет, ватă йывăççен хăрăк турачĕсене хуçа-хуçа аяккалла перет... Анчах вăл кайран чарăнса, тăпланса ларать. Ун хыççăн пĕтĕм тĕнче йăвашланса каять, илемлениме тытăнать. Мирун çилли те çавăн пекех пулчĕ. Çилли лăплансан, Мирун хăйĕн вырăнне чиперех ларчĕ, чиперрĕннех хăйне пырса тытнă çынсене, Мулкачкасси колхозникĕсене, ак мĕн çинчен питех те вăраххăн тата ытла та ретлĕн каласа пачĕ:

— Хальхи пекех астăватăп... — пуçларĕ вăл хăйĕн сăмахне.—1912-мĕш çул эпĕ уезда, Кăр-

мăш хулине, лава кайрăм. Хамăр ялти учитель, Николай Игнач, шкул валли кĕнекесем илме ячĕ. Ялтан тухса пĕр вун-вунпилĕк çухрăм кайсанах, темле вĕтĕ çумăр çума пуçларĕ. Каламалла мар йĕпе-сапа пуçланса кайрĕ. Малтан та уяр çанталăк пулман та... Çумăр татăксăр çума тытăнсан, çул йăлтах пăсăлса пĕтрĕ. Çул çинче вырăнĕ-вырăнĕпе пылчăк пакăлчак таран. Хăвăрах пĕлетĕр: мĕнле пулать кĕркуннехи çанталăк пирĕн патăмăрта. Çитменнине тата, вăрманпа каймалла пулчĕ. Урапа, малтанах çирĕпех пулманскер, çĕмĕрĕлсе кайрĕ. Кĕпчек-сене темиçе çĕртен çĕмĕрт хуллипе çыхрăм... Пĕр кун каяс вырăнне икĕ кун ытла лăпсăр-таттарса кайма тиврĕ. Хамăн çимелли пĕтрĕ. Килте иксум вунă пус укçа пурччĕ. Урăх ĕнтĕ ун чухне манăн укçи пулман та... Ăна та хампа илмерĕм. Куланайшăн хуптĕрлесен, пĕр вăхăт-лăха хăтăлкаласа юлма тăтăр, терĕм. Лава кайнăшăн тенкĕ те тăват çитмĕл пама пулчĕ.

— Ну-и выçăхрăм, касăлсах çитрĕм. Вырăс ялĕсене кĕретĕп те килсерен тенĕ пек çăкăр ыйтса çӳретĕп. Хăшĕ-пĕрисем пĕрер-икшер татăк параççĕ, ăçтисем пулнине ыйтса пĕлеççĕ. Хам мĕнле нуша курса пурăнни çинчен каласа парсан, хĕрхенеççĕ, теприсем: „Василий Фаныч", тесе кулаççĕ. Халĕ, вăт паян, хамран хам тĕлĕнетĕп: мĕнле эпĕ ун чухне упа çилли пек çиллĕме шăнарса тăма пултарнă-ши?

— Да, санăн çилĕ ытла хаяр,—хутшăнчĕ пĕри.

— Н-н-да...—терĕ тепри, вăрăммăн сывласа.

Мирун тĕрлĕ кĕпе çухавине салтрĕ, унтан ватăлнă май пĕркелене пуçланă ĕнси çинчи тарне чул пек хытса кайнă аллипе шăлса илчĕ.

— Çапах та, çитес çĕре çитрĕм-çитрĕмех,— терĕ вăл, пуçланă сăмахăн йĕрне çухатмасăр.— Кĕнекесене лав çине тиесе пĕтерсе, çыхса лартсан, пĕр çын,—кайран ăна шкулсен инспекторĕ, терĕç,—эсĕ, юлташ, йӳнех килнĕ, тесе, мана тата икĕ вăтăр пилĕк пус хушса пачĕ. Шутларăм-шутларăм, ним те шутласа кăлараймарăм—тарăхнипе, пĕрре ăша пусармалăх, кайса ĕçем-ха, терĕм. Трактир еннелле тухса утрăм. Çитсе кĕтĕм. Çынсем ытла нумаях та мар. Икĕ полицейский пур. Унта-кунта шăршлакаласа çӳрекенскерсем пулас. Пĕр пулштух эрех илтĕм те, ĕçкелесе ларатăп... Унччен те пулмарĕ—темскер ĕнсерен, ак çак вырăнтан, çатăр-р-р! сыртрĕ. Шартах сиксе ӳкрĕм. Ĕнсе çинелле алла ятăм. Хыпаланса, мĕн сыртрĕ-ши, тесе,—çав темĕскере шыратăп. Нумай шырама тимерĕ: тем пысăккĕш хăнкăла алла кĕрех кайрĕ. Ахаль те тарăхнă та тата тарăхса кайрăм. Ăш пĕтĕмпех капланса çитрĕ. Тӳсеймерĕм пулас, мĕн вăй çитнĕ таран, ак хальхи пек, кăшкăрса яра патăм:

—Э-э-э!.. Эсĕ те халăх юнĕпе пурăнатăн-и?!— терĕм. Вĕлерме те ĕлкĕреймĕрĕм—полицейскисем мана кашкăрсем пек сырса илчĕç.

— Бунтовщик вăл, çыхас ăна!—кăшкăрчĕ пĕри. Çав вăхăтрах тепри ман çине тӳрех ур-

тăнчĕ. Хайĕнчен эрехпе ыхра шăрши перет кăна. Кăшкăраканĕ хăлха чиккинчен ик-виç хут çапса илме те ĕлкĕрчĕ. Çапла вара, кăшкăра-кăшкăра, çапа-çапа мана тытса тухса кайрĕç...

Мулкачкассисем шалтах тĕлĕнсе ларчĕç. Аллисемпе пĕççисем çине шарт! çапаççĕ кăна.

Вĕшле евĕрлĕ çын юнашар сĕтел хушшинче куçĕсене улма пек вылятса, кĕç-вĕç тухса тарас пек ларать. Хăйне вилнĕ çын сăнĕ çапнă темелле. Мирунран кайса ӳкес пекех хăранипе, вăл пĕтĕмпех кăвакарса, шуралса кайнă,—темле пăхсан та, çын сăнарĕ тупма çук. „Кĕл чĕппи" теççĕ ун пек çынсене чăвашсем,—çапла, юнашар сĕтел хушшинче çын мар!—каснă-лартнă „кĕл чĕппи" ларать,

— Вара мана, бунтовщик тесе, виç хутчен сута çитерчĕç. Юлашки сучĕ Чĕмпĕр хулинче пулчĕ...

Мирун ку сăмахсене каласан, вăраммăн та хуйхăллăн сывласа илчĕ, юлашкинчен вара:

— Эх!—тесе, ача пек ĕсĕклесе йĕрсе ячĕ. Мулкачкассисем те хурланса ларчĕç, йĕрес пек пулчĕç:

— Эх!—терĕ тепĕр хут Мирун.—Пӳрт тулли ача чирлĕ арăмпа киле юлчĕ. Хама тасаранах, ним айăпсăрах, виçĕ çуллăха тĕрмене хупса лартрĕç. Виçĕ çул тĕрме—вăл тем тĕрлĕ мăшкăл, тем тĕрлĕ нуша... Унтан империализм вăрçи пуçланчĕ. Мана ирĕке кăларчĕç, анчах манăн ирĕк тамăк хуранĕ пулчĕ: тӳрех

мана вӑрҫа илсе кайрӗҫ. Вӑрҫӑра ҫур сывлӑха ҫухатрӑм. Революци пуҫлансан, хыпса ҫунса киле ҫитрӗм—арӑм выҫӑпа аптраса вилнӗ, ачасем хутаҫ ҫакса тӗнче тӑрӑх саланса пӗтнӗ...

—Н-н-да!—татах тӗлӗнчӗҫ мулкачкассисем.

— А вӑл!—каллех кӑшкӑрчӗ Мирун вӗшле евӗрлӗ ҫын ҫине аллине тӗллесе,—мӗнлескер те пулса, раскулаченнӑй элемент пулас... Ман умра ҫӗлен пек сивӗ сӑннине кӑларса:„ Ӗлӗк пурӑнӑҫ аванччӗ... Пурте пурччӗ... халӗ...“—тесе, лӑпӑртатса ларать. Хамӑр власть ҫине наркӑмӑшӑн хӑснӑнах туйӑнчӗ, чӗрем ҫурӑлса каяс пек ыратрӗ, ӑна калама ҫук мӑка ҫӗҫӗпе касрӗҫ-и, тен?... Ну-и ыратрӗ, ну-и ыратрӗ!

Ҫакӑ ӗнтӗ Мирун ҫиллин сӑлтавӗ пулчӗ, ҫакӑнтан ӗнтӗ унӑн хаяр ҫилли ҫулӑмланса кӑварланса тухрӗ.

Мирун халӗ те чӑтаймарӗ, каллех вӑл, ҫилленсе, хӗрӳленсе кайрӗ. Каллех унӑн пичӗсем хӗрелчӗҫ. Каллех тимӗр пек аллисем чӑмӑртанчӗҫ.

— У-у-у!.. Эсӗ, ҫӗрӗк!—Ҫӗкленчӗ те Мирун, пӗтӗм вӑйне пухса, тепӗр хут хаяррӑн, вӗшле евӗрлӗ ҫын ҫинелле хӑмсарчӗ. Вӗшле тӳсеймерӗ: вӑл чӗмсӗр пулса, ӳкес патне ҫитнӗскер, темле тӗлӗнмелле лӑпчӑнса, ватӑ ҫӗлен пек хуллен-хуллен шуса, столовӑйран тухса урамсем урлӑ вӑрман еннелле кайса ҫухалчӗ. Юнашар сӗтел хушшинче ҫӗтӗк пальто ҫухавийӗ кӑна выртса юлчӗ.

... Ирсĕр этем станцăн урамĕсем урлă хашкаса чупнине курсан, тӳпери уйăх та, хăйĕн хаклă çунаттисене хĕрхенсе, хулăм пĕлĕт хыçнелле кĕрсе пытанчĕ. Тен, çавăнпах та пулĕ—тĕнче маччине ала пек шăтăкласа пĕтернĕ çăлтăрсенчен те хăш-пĕрисем çунса тăракан кĕлеткисенчен вутлă чул катса илсе аялалла печĕç. Шурă чечексемпе витĕннĕ çĕмĕртсем хушшинче юрлакан шăпчăк та çак самантра хăйĕн каçхи илемлĕ юррине пăрахрĕ. Пĕр ухмах тăмана çеç, тискер сассипе тĕттĕм ăшне путнă тăплăха хускатса, вокзал çурчĕ çумне пырса ларчĕ.

* * *

Вăхăт çурçĕр еннелле сулăннă. Столовăйĕнчен Мирун, мулкачкассисем—виçĕ колхозник тата икĕ юлташ шакăлтатса калаçса тухрĕç. Пурте сыпкаланă, анчах нихăшĕ те ӳссĕр мар,—хĕрнĕ кăна.

— Эпĕ такки çав этем мĕнле çын иккенне пĕлеймерĕм,—сăмахне çавăрчĕ Мирун.

— Эсĕ илтеймерĕн иккен?—астутарчĕ халĕ çеç пырса пĕрлешнĕ юлташсенчен пĕри.

— Мĕн?—ыйтрĕ Мирун.

— Вăл—Тăванкасси пупĕ, тет.

— Çавă, çавă...—терĕç ыттисем те харăссăн.

— Вăл тарса çӳрет. Кăнтăрла вăрманта пурăнать пулас, каçпа станца та тухкалать курăнать.

— Ах, мур илесшĕ, мĕнле вăл çӳçĕсене кастарнă, сухалĕсене хыртарнă, палламалла мар — çăхан пек пулса юлнă,—тĕлĕнчĕ Мирун,

— Тĕлĕнмелли çук, хăй те вăл чăнах та çăхан аратти...

— Да, çăхан аратти... Мана вăл ӳсĕр, терĕ, пулмалла. Анчах эпĕ хамăр саккуна, Совет влаçне лапăртама памастăпах...—терĕ Мирун юлашкинчен.

Калаçса пыракан çынсем мăн урама тухнă çĕре таçта, катара, шоссе аяккинче, хастар хуралçă хăйĕн шăхличĕпе хаяррăн свисток пачĕ. Икĕ милиционер, маттур лашасем çине утланнăскерсем, хуралçă патне çил пек вĕçтерсе çитрĕç.

— Паçăрхи мар-ши?—тăрса итлерĕ Мирун.

1935.

## ЙЁРСЕМ

Хӗвел тухман. Кӗлли бригади тахҫанах ура ҫинче. Колхоз уйне ҫитни те сисӗнмерӗ. Лаптӑк ҫине акнӑ урпа хӑрасах кайрӗ. Ун тавра колхозниксем кӑткӑсем пек сырӑнчӗҫ, кӗшӗлтеттереҫҫӗ кӑна. Урпи пулса кайнӑ. Ӗнерех производствӑллӑ совещанире:

—Урпана ыран ирех вырас... Нумай япала мар... Машинӑсене ытти уя ярас...—терӗҫ.

Кӗлли, ял вӗҫнелле ҫитсен, хӑйӗн бригадине каларӗ:

—Мӗн пулсан та вӑл урпана паян кӑнтӑрлана ямастпӑр...

—Ямастпӑр!...—таварчӗҫ ӑна хирӗҫ.

—Вӑл урпа пӗрре сывламалӑх кӑна...—терӗ тепри уҫҫӑн.

—Пӗтеретпӗр... Эпир тытсан та пӗтермесен? —терӗ каллех Кӗлли, хӑйӗн юлташӗсем ҫине хавасланса пӑхса. Хаваслӑх пуринче те вӗрет. Ӗҫ патӗнче вӑл ҫӗкленнӗҫемӗн ҫӗкленет.

Урпана ӑмӑртса выраҫҫӗ. Каярах юлнисенчен кулса илеҫҫӗ:

—Эй, Раман—турӑран хӑраман, сан пилӗк ҫине куршанак ларнӑ пек...

—Ларнă, авă, ларнă...—тет Майрук та, каччăран кулса. Майрук сăмахĕсене илтсен, Лаша Раманĕ пĕтĕмпех хĕрелсе каять.

—Хĕр хĕретет...—теççĕ татах кулса. Хайхи Раман ирĕксĕрех халăх хыççăн тапаланать.

—Сире эпĕ куршанак кăтартăп,—тет хăй Майрукран вăтанса, сăмсине туртса.—Эсир хăçан та пулсан Раман халăхран юлнине курни?

—Курман, курман!—теççĕ темиçен. Хăйсем урпана кĕшĕлтеттереççĕ çеç. Хыçалта кĕлте тĕмисем купаланса пыраççĕ. Пилĕкпе аптăранă Раман та бригадăран çакланса пырать. Ăçтан юлан?—кунта юлмалли те çук, колхоз уйĕнче юлакансенчен, кахалсенчен кулаççĕ. Колхоз уйĕ, колхоз хĕрĕ кахалсене хĕретет.

—Кам ĕçлет, çав çиет... Ку Рамана та куршанак чирĕнчен сыватĕ...—тесе кулнă пек юрлать путени те тасте. Акă тата хушăран такам ачи макăрать. Вăрман хыçĕнчен хĕвел кармашса тухать. Ылттăн çуттисем таçтах саланаç. Хушăран ăшă çил выляса килет. Урпа выракансен пичĕсем ачашшăн кăтăкланаççĕ.

Ана çинче ĕç хĕрӳленсе кăна пырать. Колхозниксем пуçĕсене те çĕклемеççĕ. Тарлачченех выраççĕ. Кĕлли çамки çинче тар пĕрчисем шăрçаланчĕç. Хăй, çӳçĕсем ан кансĕрлеччĕр тесе, пуçне йытпыршипе çыхнă.

Хĕвел тӳпенелле çĕкленсен, Кĕлли:

—Привал!—терĕ.

—Привал!—терĕ „куршанак чирлĕ“ Раман

та. Колхозниксем пĕрер кĕлте илчĕç те канма ларчĕç.

Канна вăхăтра:

—Çак Хура уйри çĕр,—терĕ пĕри,—ытла та паха вĕт...

—Паха çав... Çавăнпа та вал уя ĕлĕк Хыт Карук çавăрса илнĕ...

—Пĕтĕмпе 170 гектар пулас.

—170 ытла... Унăн Улхаш патĕнче тата 400 гектар вăрман пулнă... Шуйттан пекех усал пулнă вăл Карук... Этем пулман вăл... Эсир вăл вăхăта астăваймастăр та. Улпута ун чух сухаласа, акса, вырса, çапса параттăмăрччĕ... Карук пек этемсем пире ĕмĕр-ĕмĕрĕпĕ хăратса асаплантарса пурăннă... Старостăсемпе старшинасем, заседательсемпе исправниксем, кулаксемпе улпутсем, монастырьсемпе чиркӳсем тата ытти сĕрĕмсем те пире пайтах куланайшăн, хырçăшăн асаплантарнă... Пире тискер выçлăх çава пек касна, нуша кăшлана, чир-чĕр ĕмнĕ... Сивĕ хĕл, тӳсмелле мар шăрăх, çăмăр асаплантарнă... Выльăх çулпа пырать... Вăл хăйне ăçта хăваланине те пĕлмест. Эпир те выльăх шутĕнчех пулнă. Пирĕн асап тăвайкки тăрăх чулсем çинче çарран çӳренĕ пурнăçа Советсем çеç çăлчĕç...

Кĕлли сăмахĕсем колхозниксен чĕрисем патнех пырса ларчĕç. Вĕсен сарлака çурăмĕсем тăрăх вĕри юн сăркăлтатса чупма тытăнчĕ.

—Привал пĕтрĕ!—тенĕ хыççăн, хуркайăксем пек карталанса каллех урпана сырса илчĕç.

* * *

Пĕве. Кĕмĕл пек шыв. Йĕри-тавра пилĕк таран сĕлĕ. Сĕлĕ сапакисем ăшшăн силленсе лараççĕ. Хура уй варринче путене савăнса юрлать. Пĕве хĕрринче чечексемпе витĕннĕ шырлан. Сĕлĕ тăррисем урлă ача пуçĕсем курăнса кайрĕç. Хĕвелпе çÿçĕсем шап-шурă пулнă. Пиçен тăрри пек.

—Лап-лап-лап!—ура сасси илтĕнчĕ. Унччен те пулмарĕ, шыва виçĕ ача пырса та чăмрĕç. Пĕвери кайăк-кăвакалĕсем, çунатсене харăссăн çапса, пĕлĕт çине çĕкленчĕç.

—Чăмпăл-чампăл! У-у-у-ух!.. Ах-ха-ха!..— кулса, шавласа ачасем пĕве урлă ишсе каçма тытăнчĕç. Пĕри шыв çинче выртакан хăмана ярса илчĕ. Иккĕшĕ, ăмăртса ишсе, пĕвен тепĕр енне каçрĕç те çерем çинечăсăлса выртрĕç.

—Пăх-ха ман çурăма... Бронза пек... Мĕнле çирĕп... Мана чир-чĕр тивмĕ ĕнтĕ кăçал...—тет Михей.

—А ман тата мĕнле? Куратна тата кăкăра, а?...—хирĕçлет Михее Петька. Хăй çерем çинчен çĕкленсе кăкăрне çапса кăтартать. Тимук та шывран шампăлтаттарса тухрĕ.

—Ан сирпĕт!..

—Çурăму йĕпенесрен хăратни мĕн?

Хĕвел хĕртнĕçемĕн хĕртет. Ачасем, хĕвелпе пиçсе сарăхнă ÿчĕсемпе мухтаннă хыççăн, хĕртĕнме тытăнчĕç. Пурте сылтăм айăккисене çÿлелле туса выртрĕç. Петька çул çинче калама пуçланă сăмахне вĕçлеме тытăнчĕ...

—Çав Хыт Карук тенĕскер пит пуян пулнă, тет. Авă унта, Сементи варĕнче, пысăк тĕмеске пур. Çав тĕмеске çинче Карук çурчĕсем ларнă... Унăн хĕрĕх кĕсре тата хĕрĕх кин пулнă, тет. Пĕр каçĕнче Карукăн хĕрĕх кĕсри хăмланă, тет, хĕрĕх кинĕ ача тунă, тет. Вара Карук: ман пĕтес кун çитрĕ, тесе каланă, тет... Чăнах та çав кайран пĕтнĕ...

—Ун çинчен кĕнеке çинче пур-и? -- тесе ыйтрĕ Тимук.

—Улпут пулнă пулĕ вăл?—тесе хучĕ Михей те.

—Улпут çав... Эсир улпутсем çинчен кĕнекесем çинче вуланă вĕт... Темле писательччĕ-ха улпут тарçисем хресченсене саламатпа хĕнени çинчен çырнăччĕ... Хресчене пĕрре çапнă, тет... иккă... виннă... çирĕм... аллă çапнă, тет... хресчен кăшкăрать, тет... Çĕр хут çапсан та кăшкăрнă, тет, анчах çĕр те пĕрре çапсан—хресчен лаштах вилсе кайнă, тет...

—Мĕншĕн хăть çĕр хут çапнипех чарăнман-ши?

—Çавах вăл вилетчĕ,—тесе ответлерĕ Петька.—Ну вăт, Карук тенĕскер те çавăн пек хĕсĕрлесе пурăнакан пулнă. Ăнлантăр-и?—терĕ вăл сулахай айăкки çинчен хырăм çине çаврăнса

—Ăнлантăмăр,—терĕç иккĕшĕ.

Пĕве шăпах. Чакăр куç пек. Сĕлĕ сапакисем савăнса ларaççĕ. Пĕве пуçĕнчи хăмăшсем хуллен хăшăлтатса темле юрă кĕвĕлеççĕ. Вĕсен кĕвви Хура уйран илтĕнекен юрă сассипе пĕр-

лешсе кайрĕ. Кĕлли бригади урпа вырса пĕтерне те, хавассăн юрă янратса килет:

Тырă пиçсе çитнĕ чух та
Килес килмест уйхиртен, уйхиртен.
Килес килмест уйхиртен;
Ĕçсем лайăх пынă чух та
Каяс килмест, ай, ĕç панчен.
Ĕçсем лайăх пынă чух
Каяс килмест,
Каяс килмест ĕç панчен...

* * *

Пĕтĕм бригада пĕве хĕрне çитрĕ. Хăшĕсем çул çинчех кĕписене хывнă. Хĕрарăмсем шырлан тăрăх пĕве кукринелле кайрĕç те курăнми пулчĕç. Пĕве колхозниксене хавассăн шыва чĕнчĕ. Кăнтăрти хĕвел те хăйĕн нихăçан пĕтме пĕлмен ăшшипе хĕрхенмесĕр хĕртме тытăнчĕ. Пĕве пичĕ кулса хумханса çеç тăрать. Колхозниксем хашĕ пĕвене урлă, хăшĕ пĕвене тăрăх ишеççĕ... йăсласçĕ... Шавлаççĕ...

—Шыва та хăть бригадипех кĕреççĕ-çке,— тесе иртеççĕ Хура уй çулĕпе пыракан çынсем.

Раман пĕве хĕрне тухрĕ те урпа вырнă чух тусанланнă пит-куçне çăва пуçларĕ. Çав вăхăтрах ун патне Кĕлли ишсе çитрĕ.

—Эсĕ çăрттанпа пĕрех ишетĕн...

—Ишмесĕр... Ахаль мар эпĕ тĕнчере 87 çул пурăнатăп. Атăл çинче бурлакра 12 çул çӳренĕ... Сахал мар ишнĕ.

Кёлли çак сăмахсене каласан, Хура уй çинелле пăхса илчĕ. Унтан ыран-виçмине вырмалли сĕлĕ çине пăхрĕ. Унăн ăшĕ çунма тытăнчĕ.

—Паян пĕр ĕçне пуçтартăмăр,—терĕ хăй Рамана.

—Шывра та...—пуçларĕ Раман. Пĕтĕмпех калаймарĕ. Шухăшĕсене хăйăн ăшĕнче кăна вĕçлерĕ. „Кунта ĕç çинчен калаçмасан та юрĕччĕ",—тесе каласшăн пулчĕ вăл.

—Сĕлĕсем те шăлтăрка пуçларĕç...—терĕ каллех Кёлли. Раманшăн ку сăмахсем уммалут пек йўçĕ пулчĕç. Унăн умне колхоз сĕлли тухрĕ. Колхозниксем... ударниксем ретĕн ретĕн тухса тăчĕç. Унтан икĕ куçĕ умне ĕç нормисем пырса ункăланчĕç. Пилĕк ыратса, касса илчĕ.. Колхозниксем шыва урисемпе çапса ишни „куршанак ларнă" тенĕ пек туйăнчĕ.

—Эх,—терĕ вăл чунĕ тăвăрланнипе. Ним тăваймарĕ те пĕве варнелле чăмрĕ.

—Аптăранă кăвакал кугăн чăмрĕ,—тесе юлчĕ Кёлли.

—Турăран хăраман, ĕçрен хăракан Раман чăмрĕ,—терĕç çерем çинче выртакан ачасем те. Кулчĕç виççĕн харăс. Унтан пурте Раман тухмалли çĕре чăмрĕç.

Унччен те пулмарĕ, Михей Раман çине утланса тухрĕ. Петькăпа Тимук Раман кĕлетки çине çакăнчĕç.

Колхозниксем пĕрин хыççăн тепри çырана тухма тытăнчĕç. Вĕсемпе пĕрлех çамрăк ачасем йывăр шăмшаклă Рамана турткаласа тухрĕç.

Кӗпесем тӑхӑнаҫҫӗ. Пурте тап-таса. Кӗлли хӑйӗн бригадинче паттӑр пек. Аллисем тӗлӗнмелле патмар. Ҫурӑмӗ ҫинче темӗскер йӗрсем пур.

—Мучи, кала-ха, сан ку мӗн йӗрӗсем?— ыйтрӗ Михей. Пурте Кӗлли ҫурӑмӗ ҫинелле пӑха пуҫларӗҫ. Кӗлли нумайччен ним шарламасӑр тӑчӗ. Юлашкинчен, вӑрӑмӑн сывласа, калама тапратрӗ:

— Асӑнас килмест чуна ыраттаракан япала ҫинчен... Тен, сире, ҫамрӑксене, калас-и?..

— Кала!.. Кала!..

— Ну, эппин калам... Малтан пӑхӑр лайӑххах...

Михей аллипех тытса пӑхрӗ. Старик ҫурӑмӗ-ҫӑпата йӗрӗсем пек, пачкапа сӑтӑрнӑ пек.. Йӗрсем урлӑ та пирлӗ каяҫҫӗ.

— Ну вӑт...—пуҫларӗ Кӗлли, хӑйӗн хулӗсене тимӗр пек алтупанӗсемпе шӑлса.

— Эсир пӗлместӗр,—терӗ вӑл малалла,— ӗлӗкхи самана мӗн тӗслӗ пулнине... Вӑл юн тӗслӗ пулнӑ. Шкулта кӗнекесем вулатӑр. Анчах кӗнекесем ҫинче пурте ҫук тесен те юрать. Ман ҫӳрӑм ҫинче мӗн пур тетӗр пулсан, калам сире: вӑл кӗнеке ҫинче ҫырӑнман йӗрсем. Вӗсене Карук хуҫасен самани саламатпа, юнпа ҫырнӑ...

Ҫамрӑксем старик сӑмахне итленӗ ҫӗрте Карук улпутӑн хӗрӗх кӗсрипе хӗрӗх кинне аса илчӗҫ. Вӗсен куҫне чӗнрен явнӑ тӑхлан вӗҫлӗ саламат курӑнчӗ.

Ун пек саламата вĕсем чи малтан Шупашкарти музейра курнă. Халĕ аса илчĕç.

— Вĕсене эпĕ Карук патĕнче 20 çул пурăнса туянтăм. Карук пирĕншĕн эсрелле çăтмах, сĕлĕх, эрешмен пулса... Тарăхаттăмăрччĕ.. Йĕреттĕмĕрччĕ... Тарăхнипе унăн Сементи тĕмески çинчи килçуртне çунтарса ятăмăр.

— Эсĕ хĕрĕх кĕсрепе хĕрĕх кин çинчен кала-ха тата...—пӳлчĕ Петька.

— Вăл юмах... Ĕç апла пулман... Хăйне Упа çырми ялĕнчи хресченсем сенĕксемпе чиксе пăрахрĕç. Унтанпа вăтăр çула яхăн иртрĕ ĕнтĕ.

— Мĕнле хăтăлтăр?

— Эпĕ Атăл çине бурлака тартăм... Унта каллех ман пыршă-пакартана кумрĕç... Карук çĕрне, Хура уя, 17-мĕш çул çеç улпут ăратнисенчен тара илсе пурăнакан кулаксенчен туртса илтĕмĕр.

— Халĕ пирĕн те...—терĕ пĕри.

— Пирĕн те, колхозра...—терĕç теприсем. Старик кĕписене тăхăнса пĕтерчĕ. Пурте кайма хыпаланчĕç. Кĕлли хăйĕн сăмахне çул çинче пĕтерчĕ.

— Вилсен те ĕлĕкхи самана кирлĕ мар... Колхозшăн, колхоз çĕрĕшĕн пĕтĕм пурнăça паратăп. Вилсен те колхоз çĕрĕ çинче вилес,— çакăн пек калаççĕ ман çурăм çинчи йĕрсем.

1933.

---

# ТУРĂСĂРÇЕМ

I

Çĕмĕрле станцине антăм та, хамăр ялсем пулсан, пĕрле кайма аванччĕ тесе, унталла-кунталла пăхкаласа, шоссе тăрăх утрăм.

Çанталăк калама çук шăрăх. Тӳпере пĕр пĕлĕт татки те çук. Хĕвел хĕртсе кăна тăрать. Шоссе çине тăкнă хăйăр вĕри кĕл пек пулса кайнă. Ку çул тăрăх çара уран кайсан, ура тупанĕ пиçнĕ какай пек пулса тăрĕ, тесе шухăшлатăн ирĕксĕрех.

— Кунта Н. ялĕнчен килнĕ çынсем çук-и?— ыйтрăм эпĕ пĕр лугра кĕлеткеллĕ вăтам çулхи чăвашран.

— Эпĕ хам янташсем пулатăп... Киле сирĕн ял витĕрех каятпăр. Пĕрле кайăпăр. Манăн лаша аван, хам пĕчченех...—лартса кайма хатĕр пулнине систерчĕ Янташ çынни.

— Хамăр ялсем çуках пулсан, пĕчченех те утăп. Манăн япала-качка çук. Çулĕ лайăх, инçе мар. Вăрмантан тухсан, пирĕн ял курăнать те,— ответлерĕм эпĕ янташсене.

Ĕç тухмасть, лартса каясси пулмасть, терĕ пулас янташсем хăйĕн ăшĕнче: пĕр пӳрт умĕн-

че ларакан ҫатан урапа патӗнче пуҫне силлесе тӑракан лаша ҫинелле аллипе тӗллерӗ те:

— Ҫав сирӗн колхоз йӑйӑрӗ пулмалла. Паян ирех икӗ старик килнӗччӗ. Леспромхоз кантурне кӗрсе пӑх. Вӗсем халӗ унта пулма пултараҫҫӗ,—терӗ.

Ҫапла каласса тӑнӑ вӑхӑтра такам:

— Ӑҫта каятӑн?—тесе кӑшкӑрчӗ уҫса хунӑ чӳрече витӗр. Пӑхрӑм та хамӑр ялти колхознике, Петр Ивановича (ялти пек каласан, Манах Петӗрккине) курах кайрӑм. Ӑна эпӗ чӳрече витӗрех алӑ пырса патӑм.

Леспромхоз ҫуртӗнче халӑх туллиех.

— Кам у?—ыйтрӗ алӑк патӗнче ларакан ҫынсенчен пӗри.

Унччен те пулмарӗ—Петӗркке мучи патне Павӑл Тихонович (ялта чӗннӗ пек каласан, Турӑсӑр Упавӑл) пырса та тӑчӗ.

— Тӑхта... Киле пӗрле кайӑпӑр,—терӗҫ вӗсем иккӗн пӗр харӑс.

— Ҫавӑнпа сире шыраса килтӗм..—савӑнтӑм эпӗ, хамӑр ялти колхозниксене тӗлпулнӑшӑн хӗпӗртесе. Унтан ҫатан урапа патне кайса, чӗрӗ утӑ ҫине лартӑм.

... Ялан тенӗ пекех, кама та пулин кӗтсе ларатӑн пулсан, пуҫа мӗнле те пулин шухӑш пырса кӗрет. Павӑл мучи... Ялта ӑна эпӗ ҫураличченех: „Турӑсӑр Упавӑл“ тесе чӗнме тытӑннӑ. Мӗнле майпа ӑна „Турӑсӑр“ хушамат панӑ? Тӗлӗнмелле вӗт Павӑл Тихонович хушамачӗ!..

Петр Иванович хушамачӗ тӗлӗнмелле мар-и мӗн тата?..

Тӗлӗнетӗп—пирӗн ялти чӑвашсем, хут ҫинче нумайӑшӗ Иванов та Павлов пулсан та, хушаматсем шухӑшласа кӑларма маҫтӑр. „Чӑвашсем хушаматланаҫҫӗ" тенӗччӗ чӑвашсен пӗр ҫивӗч писателӗ, анчах вӑл чӑваш писателӗсен хушамачӗсем мӗнле пулни ҫинчен кӑна кулса ҫырнӑ...

— Мӗнле-мӗнле хушамат ҫук-ши пирӗн ялта, мӗнле-мӗнле майпа пулман-ши вӗсем? Вӑт ҫав хушаматсем ҫинчен ҫырасчӗ кӑшт та пулин.

II

Ҫӗмӗрлерен вӑхӑт каҫалана сулӑнаспа тух рӑмӑр.

— Хыпаланас мар, каҫчен Элӗке те ҫитме пулать,—терӗ станцӑра Павӑл мучи. Шӑрӑх. Ҫавӑнпа та эпир лашана вӑраххӑн уттарса пыратпӑр.

Вӑрманта сывлама ҫӑмӑл. Ҫанталӑк шӑрӑх тӑрать пулсан та, хура вӑрман хӑйӗн уҫӑ сывлӑшне ҫухатман. Таҫтан ватӑ юмансем айӗн, шурӑ ураллӑ хурӑнсем хушшипе уҫӑ сывлӑш ҫаврӑнса килет.

Уҫӑ ҫӗрте калаҫма та уҫӑ. Сас та уҫӑ тухать. Эпир виҫҫӗн шӑкӑлтатса калаҫса пыратпӑр: стариксем ыйтаҫҫӗ, эпӗ мӗн пӗлнӗ таран ответлетӗп. Вӗсен малтанхи сӑмахӗ хулари пурнӑҫ ҫинчен пулчӗ. Эпӗ, вӗсем хулари пурнӑҫпа интересленнине кура, хулара хам мӗн-курниилтни ҫинчен каласа пама тытӑнтӑм. Ленин-

градри паха çуртсем, сарлака та илемлӗ урамсем, тӗрлӗ музейсем, палăксем çинчен, Мускаври метрополитен, Ленин мавзолейӗ, Кремль, Максим Горький ячӗпе тăракан културăпа кану паркӗ çинчен каласа тӗлӗнтертӗм...

— У çамрăклах телейлӗ пулчӗ. Таçта та çитсе курать у. Тем те пӗлет у...—калама тытăнчӗ „вăл“ сăмах вырăнне яланах „у“ калаканскер, çавăнпа та „Павăлран“, „Упавăл“ пулнă мучи.

— Çапла вӗреннӗ çынсем хамăр ялта пӗр çирӗм çын пулсан, институт лартсан та, преподавательсем çитмелле...—хутшăнчӗ Петӗркке мучи те.

Лаша пирӗн татах та ерипентерех утса пыма пуçларӗ. Шоссе çулӗ çип çапнă пек тӳрӗ выртать, шӗвӗрӗлсе пӗтнӗ пек, таçта кайса çухалать.

Эпӗ, çтанцă урамӗнче мучисене кӗтсе ларнă чух пуçа çӗмӗрнӗ шухăшсене астуса илнӗ май:

— Сирӗн хушаматăрсем тӗлӗнмелле: пӗри Турăсăр, Павел Безбожный; тепри Манах, Петр Монахов,—терӗм.

— Эсӗ анчах мар... Мӗншӗн мана Турăсăр тенине ялан ыйтаççӗ. Ун çинчен пӗлес килет пулсан, каласа парам-ха эппин сана та...

Тытăнчӗ Павăл Тихонович „Турăсăр“ тенӗ ят ăçтан пуçланса кайни çинчен калама. Тӗлӗнмелле пулнă иккен унăн ячӗ, пӗтӗмпех тӗлӗнтерчӗ Павăл мучи ун çинчен каласа.

... Çулла. Паянхи пекех шăрăх кун. Павăл Тихонович пурте-кӳнче çăпата сапласа ларнă. Хĕрарăмсем урамра, çăка айĕнче, хур пулкки пек пухăнса ларнă та, юрла-юрла хăшĕ тĕрĕ тĕрленĕ, хăшĕ кĕпе çĕленĕ.

Ял пуçĕнчен, Вăрăм çӳç Хĕлĕп урамĕ тăрăх, пĕр лав килнĕ. Лав çинче икĕ манах. Хăйсем темĕскер тиенĕ. Куршак тейĕн—куршак мар, лапатка тейĕн—лапатка мар.

— Иккунă кама кирлĕ, икку-нă-ă-ă...—кăшкăрнă пĕр манахĕ.

— Эй, инкесем-арăмсем, турăш-тавраш кирлĕ мар-и?—кăшкăрса ыйтнă тепри.

Юрласа ларакан хĕрарăмсем тĕлне çитсен, лав чарăннă. Арăмсем ĕçлеме пăрахнă. Тĕррисене каскасем çине хунă. Йĕпписене пирсем çине чикнĕ. Пĕрин хыççăн тепри лав патне утнă. Савăк юрă сасси таçта кайса çухалнă.

— Кĕтерин, сан илес пулать пĕр иккунне. Эсир анчах уйрăлса тухнă. Çĕнĕ пӳрте çĕнĕ иккун кирлĕ,—каланă пĕри арăмсем хушшинче.

Кĕтерин инке иккунă тиенĕ лав патне пынă та:

— Мĕн чӳл тăрать?—тесе ыйтнă.

— Пĕр пăт тырă...—тесе хунă пĕр манахĕ.

— Çав хăма татăкнех пĕр пăт памалла-и?..

— Сана, кинĕм, çылăх мар-ши çавăн пек калама?.. Çылăх, çылăх сана çавăн пек сăмахсемшĕн...—хăратма тытăннă Кĕтерин инкене иккĕмĕш манахĕ.

— Хаклă та, мĕнле илес ăна?

— Мĕн хакли пур унта, хусамăрах пĕлетĕр турăсăр пурăнма юрамасть.

— Юрамасть те-ха... анчах тырри çук-çке?..

— Пире çăмарта та юрать. Икĕ теçетке çăмарталлах паратпăр...—каланă манах, иккунăсене шăналăк айĕнчен кăларса. Хăй кучне пĕр май вылятнă. Тутисене çуланă. Сахăр ирĕлнĕ пек ирĕлнĕ вăл çамрăк арăм Кĕтерин умĕнче. Иккĕмĕш манахĕ пĕр пĕчĕкрех иккуна илнĕ те Кĕтерине чăп-чап! чуптутарнă.

— Халĕ илесех пулать, — тенĕ хăй сивĕ саспа.

— Илмесен, тытать, çылăх...—пулăшнă ăна тутисене пĕрмай çулаканĕ.

Кĕтерин, пĕчĕкренех турăсенчен, хĕртсуртсенчен, киреметсенчен, йĕрĕхсенчен хăраса ӳснĕскер, кăвакарса, шуралса кайнă. Вăл ăмашĕ каланă сăмахсене аса илнĕ:

— Турра тĕкĕнме юрамасть, вăл тытать, сурана ертет...—тенĕ ăна ватă ăмăшĕ. Кĕтерин хăранă. Акă халĕ те хăратакан шухăшсем Кĕтерине çатăркка аллисемпе ыталаса илнĕ. Ку иккуна мĕнпе илес? Тыра çук. Çăнăх та пăт ытларах кăна юлнă. Çĕнĕ тырăччен виçĕ уйăх пурăнмалла. Ĕç çинче выçă лараймăн? Çăмарта тата ăçтан пултăр? Пĕтĕмпе те икĕ чăхă кăна. Пĕр пĕрчĕ сĕлĕ çисе курман вĕсем. Пур-çук çăмартана Павăл пухса пырать. Пухмĕччĕ, анчах ăна куланайшăн кастараççĕ... Мĕншĕн пытăм-ши ку манахсен лавĕ патне, мĕншĕн пырса çылăха кĕтĕм-ши?..

Кĕтеринĕн пуçĕ çаврăна пуçланă, куçĕсем умне тĕтре карса илнĕ. Тĕттĕмленсе килнĕ. Кĕтерин йĕмеллипех йĕнĕ. Манахсем ăна пăхман, манахсем ĕçленĕ,—мĕнле те пулин тырă, çăмарта, укçа пухса пултăр вĕсене.

— Мĕн пулнă-ха кунта?—тесе Павăл та урама сиксе тухнă.

Манахсем кула-кула каланă:

— Арăмна иккун илсе пар...

— Ак çак иккунне юратать вăл...

— Иккуна ытарайманран йĕрет...

— Ах-ах-ах!—кулнă Сантăркка ывăлĕсем—Петĕрпе Васлийĕ те Ванюкĕ. Чăтайман,—ухмах, каçăр ывăлĕ те кулнă. Анчах вĕсен мĕншĕн кулас мар? Вĕсен вĕт арман, вĕсен вĕт кĕлетре пин пăт тырă! Вĕсен кĕтесри туррисем те хăма татăкĕсенчен тунăскерсем мар. Вĕсен кĕтесре ылттăнласа, кĕмĕллесе пĕтернĕ иккунăсем.

Манахсемпе пĕрле Сантăркка ывăлĕсем кулнине илтсен, Кĕтерин кăна мар, Павăл Тихонович хăй те хăраса, вĕриленсе кайнă. Павăл пĕр тумлам эрехсĕрех тайкалана пуçланă. Сантăркка ывăлĕсемпе манахсем кулни — унтан Сантăркка килĕнчи сарлака иккунăсем, сарлака куçкĕскисем, манахсен лавĕ çинчи вĕт иккунăсем пин тĕслĕ сасăпа кулнă пек туйăннă.

... Павăл мучи татах та нумай каларĕ. Эпĕ унăн сăмахĕсене кĕскен кăна çырса илтĕм. Юлашкинчен Павăл Тихонович лач! сурчĕ те çак тĕлĕнмелле ĕç мĕнпе пĕтнине каласа пачĕ.

— Ну, мĕн тунă тетĕн ĕнтĕ?.. Арăм хăранипе чирлесе кайрĕ. Тарăхнипе кĕтесри турăсене веçех Эскетен шывнелле кăларса ярăнтартăм. Сире çапла халăха улталаса сутаççĕ пулсан, манăн пӳртре турă тавраштĕ ан пултăр, эпĕ турăсăрах та пурăнма пĕлĕп, терĕм хама-хам...

— Турăсăрах пурăнтăн-и вара?—ыйтрăм эпĕ.

— Турăсăрах пулмасăр... Çавăн пирки ĕнтĕ мана Турăсăр Упавăл тесе чĕнме пуçларĕç те. Ĕлĕк çиленеттĕм, халĕ хĕпĕртетĕп,—ответлерĕ вăл манăн ыйтăва хирĕç.

... Павăл Тихонович хăйĕн калавне каласа пĕтерсен, Петр Иванович:

— Эпĕ, малтанхи çулсенче турăсăр пулман пулсан та, халĕ турăсăр кăна мар, турăсăрсен ячейкин членĕ... Анчах мĕншĕн турăсăра тухнине пĕлетĕр-и?—терĕ.

— Ăçтан пĕлес,—осветлерĕм эпĕ.

— Пĕлместĕр пулсан, пĕр ик-виç сăмахпа каласа парам-ха эппин.

— Кала-ха, кала!..—пулчĕ пирĕн сăмах.

III

... Петĕркке мучи тăлăхăн ӳснĕ. Çамрăк чухне темиçе çул хушши кĕтӳ пăхнă. Кунĕн-çĕрĕн ĕçленĕ. Турра кĕлтунă. Чиркĕве ытла та тăтăш çӳренĕ. Вылăри часовньăри турра вăхăтра „çураçтарнă". Пуясшăн пулнă—нимĕнле те пуяйман: пĕр вĕçĕ çыхăнса пынă вăхăтра тепĕр вĕçĕ сӳтĕлсе пынă, каярахпа вара сӳтĕлсе пыракан вĕçĕ кăна тăрса юлнă, вăл та

пулсан çĕрсе пĕтнĕ. Петĕркке ĕç шыранă, ĕç çук пулнă. Настăрнă[1] кайма хатĕрленсе пурăннă—каяйман, укçа пулман. Юлашкинчен, Вăрнарти мăнастирте выльăх-чĕрлĕх пăхакан, вутă-шанкă пухакан кирлĕ тенине илтсен, ачисемпе арăмне киле хăварса, Вăрнара, хĕрарăм мăнастирне, ĕçе кайса кĕнĕ. Унта вăл виçĕ çул хушши ĕçлесе пурăннă.

— Мăнастырте ĕçлесе пурăннă май, мана ялта „Манах Петĕркки" тесе чĕне пуçларĕç. Малтанах эпĕ те çиленеттĕм, анчах ялта пин çын, пин çын пĕрре каласан та пин калать—ăçтан çиленсе çитерен кашнинче?

— Çапла вара „Манах" ятне илтсе юлтăни?—ыйтрăм эпĕ.

— Юлтăм çав. Халĕ те Манах Петĕркки, теççĕ. Мăнастирте вара хам виличчен тĕлĕнсе пурăнмаллине куртăм...

Петĕркке мучи манашкăсем мĕнле алхасса пурăнни çинчен калама тытăнчĕ. Вăл калана тăрăх, усал, намăс ĕçсемшĕн чăнах та çылăх пулмалла пулсан, çĕр çинче чи çылăхлă çынсем манашкăсем пулнă пулĕччĕç. Пĕр Машăпа Васса çылăхне кăна çĕр мĕнле йăтса тăнă-ши? Юрать,—çылăх таврашĕ çук. Этем чăнах та çылăха кĕме пултарать пулсан, эпĕ хам та вилсен „тамăка" кăна лекмелле,— тĕлĕне-тĕлĕне каларĕ Петĕркке старик.

— Ак кăçал пире Антун „Тĕклĕмирун" ятлă кĕнекене вуласа пачĕ-ха...

[1] „На сторону" тенĕ сăмахран пулнă.

— Мĕнле кĕнеке?—ыйтрăм эпĕ, мĕнле кĕнеке çинчен каланине ăнланса илеймесĕр.

— „Тĕклĕмирун"!—каларĕ вăл тепĕр хут, кĕреçе пек сухалне хускатса.

Эпĕ чухласа илтĕм. Хамăр ялти учителĕн, манĕн çывăх юлташăн, Антунăн, „Декамерон" ятлă кĕнеке пурччĕ. Çав кĕнеке çинче сахал мар тĕрлĕ аббатсен, манахсен, манашкăсен аскăнчăк ĕçĕсем çинчен çырнă. Учитель унти новеллăсене стариксене, турăсăрсен ячейкин членĕсене, вуласа панă мĕн. Çавăнпа та Петĕркке мучи мăнастирте курнă ĕçсене „Декамерон" çинче çырнă юмахсем пек, тет. Вăрнарти мăмастырте пулнă ĕçсем те юмахри пекех, анчах вĕсем чăн пулнă.

— Эсĕ çамрăк çын, вĕреннĕ юлташ. Сан умăнта пурне те калама мана намăс та...—терĕ Петр Иванович хăйĕн сăмахне вĕçлесе, темле хăрарăм пек вăтанса.

— Турă пулсан, çав манашкăсем çавăн пек ашкăнса пурăннă пулĕччĕç-и?—тӳс?ймерĕ Павăл Тихонович та.

— Вăл нихçан та пулман,—татса хучĕ Петĕркке мучи юлашкинчен.

— Шуйттанĕ те пулман,—хушрăм эпĕ.

— Мĕн турри?.. Мĕн шуйттанĕ?.. пире улталаса, хăратса пурăннă çав. Çитĕ, малашне турăсемпе шуйттансене ĕненмесĕрех пурăнар.

— Тĕрĕс,—терĕм эпĕ, çавтери ватă стариксем тĕн сĕрĕмĕнчен, халăх анкă-минкĕлентерекен религирен хăтăлнишĕн савăнса.

Б-1632/б Чув.

IV

1-257а

... Сисмен те—сакăр çухрăм чăсăлса выртакан вăрман витĕр пыракан шоссе пире Турхан колхозĕ уйне илсе те тухнă. Çырма урлă каçса пĕчĕк ту çине хăпарсан, хамăр ялăн йăмрисем курăна та пуçларĕç. Тепĕр вунă минутран ватă йăмрасем айĕнче хурт вĕллисем пек пытанса ларакан пÿртсемлĕ тăван яла çитсе те кĕтĕмĕр.

— Пĕлетĕн-и эпир мĕнлине?—ыйтрĕ уйрăлас умĕн Турăсăр Упавăл.

— Пĕлтĕм... Эсир ăслă та хăюллă старикçем, çавăнпа та—турра та, шуйттана та ĕненместĕр,—ответлерĕм эпĕ, пĕр аллăмпа Павăл мучи аллине тепĕр аллăмпа Петĕркке мучи аллине пăчăртаса.

1935.

Инв. N. 2274

1996 г.
Акт № 450
Вкладн. л 1909

В. ДОЛГОВ (Хударзем)

ВЕСЕННИЕ РАССКАЗЫ

на чувашском языке

Чувашгосиздат—Чебоксары

1 9 4 3

0-20
Чув.
1-257а